М. Горького

ПӖТӖМ ТӖНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПӖРЛЕШӖР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВӖ

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Чӑваш обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗпе Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

1953 ҫул Август 8 ШӐМАТКУН № 155 (9064)
36-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

Паянхи номерте:

СССР Верховнӑй Совечӗн ларӑвӗсем. Национальноҫсен Совечӗпе Союз Совечӗн 1953 ҫулхи августӑн 6-мӗшӗнче пулнӑ ларӑвӗсем ҫинчен информацилле пӗлтерӳсем (1 стр.).
Национальноҫсен Советӗнче (1 стр.).
Союз Советӗнче (1—2 стр.).
ССР Союзӗн 1953 ҫулхи Государство бюджечӗ ҫинчен тата ССР Союзӗн 1951 ҫулхипе 1952 ҫулхи Государство бюджечӗсене пурнӑҫлани ҫинчен. Национальноҫсен Совечӗн бюджет комиссийӗн председателӗ И. С. Хохлов депутат тунӑ содоклад (2—3 стр.).
ССР Союзӗн 1953 ҫулхи Государство бюджечӗ ҫинчен тата ССР Союзӗн 1951 ҫулхипе 1952 ҫулхи Государство бюджечӗсене пурнӑҫлани ҫинчен. Союз Совечӗн Бюджет комиссийӗн председателӗ Л. Р. Корниец депутат тунӑ содоклад (3 стр.).
Колхозниксемпе механизаторсем! Тӑванла виҫӗ республика ӑмӑртӑвӗнче илнӗ обязательствӑсене часлӑн пурнӑҫлар! И. Димитриев. — Ял Совет сессийӗ тырпул пухса кӗртес ӗҫ ҫинчен.
Совет Союзӗпе Аргентина пӗлтерни (4 стр.).

ССР Союзӗн Государство бюджечӗ

Августӑн 6-мӗшӗнче пичетлесе кӑларнӑ умстатьяра «Правда» хаҫат ҫапла ҫырать:

Ӗнер, Мускавра, Кремльти Пысӑк Двоцрецра, Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗ уҫӑлчӗ. Сесси кун йӗркинче тӑракан ыйтусем — ССР Союзӗн 1953 ҫулхи Государство бюджечӗ ҫинчен тата ССР Союзӗн 1951 ҫулхипе 1952 ҫулхи Государство бюджетне пурнӑҫлани ҫинчен калакан отчета ҫирӗплетесси; СССР Верховнӑй Совечӗн Президиумӗ кӑларнӑ Указсене ҫирӗплетесси.

Союз Совечӗпе Национальноҫсен Совечӗн пӗрлехи ларӑвӗнче халӑх суйланӑ ҫынсем — СССР Верховнӑй Совет депутачӗсем — ССР Союзӗн 1953 ҫулхи Государство бюджечӗ ҫинчен тата ССР Союзӗн 1951 ҫулхипе 1952 ҫулхи Государство бюджетне пурнӑҫлани ҫинчен тунӑ доклада пысӑк тимлӗхпе итленӗ. Бюджет ҫинчен калакан проектпа пӗрле правительство СССР Верховнӑй Советӗнче пӑхса тухма ялхуҫалӑх налогӗ ҫинчен калакан Закон проектне тӑратнӑ.

Верховнӑй Совета ҫирӗплетме тӑратнӑ ССР Союзӗн 1953 ҫулхи Государство бюджечӗ, пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑхӑн малтанхи икӗ ҫулӗ хушшинче бюджета пурнӑҫланине кӑтартакан цифрӑсем, ҫавӑн пекех ялхуҫалӑх налогӗ ҫинчен калакан ҫӗнӗ Закон проекчӗ ҫакна уҫҫӑн кӑтартса параҫҫӗ: пирӗн ҫӗршыв, Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе, хӑйӗн социализмла экономикине хӑватлӑн ҫӗклентерес ҫулпа, халӑхӑн материальнӑй пурнӑҫне лайӑхлатас тата культурине ӳстерес ҫулпа шанчӑклӑн малалла пырать.

1953 ҫулхи Государство бюджетне тупӑшсем енӗпе 543,3 миллиард тенкӗлӗх, расходсем енӗпе 530,5 миллиард тенкӗлӗх ҫирӗплетме палӑртнӑ. Тупӑшсем расходсенчен 12,8 миллиард тенкӗ ытларах пулассӗ.

ССР Союзӗн 1953 ҫулхи Государство бюджечӗ Совет Союзӗн хӑватне малалла тӗреклетмелли бюджет, мирлӗ строительство бюджечӗ пулса тӑрать. Унӑн тӗп задачи вӑл—Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗн историллӗ решенийӗсем тӑрӑх Совет правительстви кӑҫалхи ҫул валли палӑртнӑ пысӑк программӑна, ӗҫҫыннисен материальнӑй пурнӑҫне лайӑхлатас тата культурӑлла шайне ӳстерес тӗллевпе палӑртнӑ ӗҫсене пурнӑҫлама укҫа-тенкӗ ҫителӗклӗ парса тӑмалла тӑвасси пулать.

Бюджетра правительство куллен кирлӗ таварсен ваккӑн сутмалли государственнӑй хакӗсене вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи тапхӑрта кӑҫал ниҫҫанхинчен те ытларах йӳнетес тӗллӗшпе туса ирттернӗ пысӑк ӗҫсем, ҫавӑн пекех тата ҫак таварсене туса кӑларассине чылай ӳстерес енӗпе тумалли ӗҫсем палӑрса тӑраҫҫӗ. Пурте пӗлеҫҫӗ: кӑҫалхи апрелӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа тавар хакӗсене йӳнетни халӑха ҫулталӑкне 46 миллиард тенкӗлӗх ытла услам парать. 1953 ҫулхи Государство бюджетӗнче ялхуҫалӑхне хӑвӑртрах аталантармалла тӑвас, халӑх валли апат-ҫимӗҫ, промышленность валли чӗртавар тӑратма ялхуҫалӑх продукчӗсем туса кӑларассине ӳстерес, колхозсемпе колхозниксен экономикӑлла интересне ӳстерес, ҫавӑн пекех тата хресченсем ҫине налог хурассине чылай чакарас ӗҫсем палӑрса тӑраҫҫӗ. Бюджетра халӑх хушшинче саракан государство заемӗн суммине икӗ хут ытла чакармалла туни те палӑрса тӑрать.

СССР Государство бюджечӗн расхочӗсем кӑҫал, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, 70,3 миллиард тенкӗлӗх е 15,3 процент ӳсеҫҫӗ. Ҫак расходсен пысӑк пайӗ халӑх хуҫалӑхне тата социальнӑйпа культура ӗҫӗсене тивӗҫтерме каяҫҫӗ. Бюджетри укҫа-тенкӗне ҫакӑн пек уйӑрса парасси социализмла строй условийӗсенче кӑна пулма пултарать, мӗншӗн тесен социализмла стройӑн тӗллевӗ вӑл—пӗтӗм обществӑн пӗрмай ӳссе пыракан материальнӑй тата культурӑлла ыйтӑвӗсене пур майсемпе те ытларах тивӗҫтермелле тӑвасси пулать.

Халӑх хуҫалӑхне аталантарас ӗҫе иртнӗ ҫулхинчен 13,7 миллиард тенкӗ ытларах расходлама палӑртнӑ. Ҫак укҫа-тенкӗрен пысӑк пайӗ промышленноҫа, чи малтан, социализмла экономикӑн никӗсӗсен никӗсӗ пулса тӑракан йывӑр индустрие каять. Халӑх валли куллен кирлӗ таварсем туса кӑларакан промышленноҫа малалла вӑйлӑн аталантарма та укҫа-тенкӗ нумай уйӑрса параҫҫӗ. Ҫавӑн пекех ялхуҫалӑхне аталантарма та укҫа-тенкӗ нумай пама палӑртнӑ.

Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви халӑх ырлӑхӗшӗн, унӑн пурнӑҫне пур майсемпе те лайӑхлатассишӗн, культурӑлла шайне ӳстерессишӗн ывӑнма пӗлмесӗр тӑрӑшаҫҫӗ. Халӑха вӗрентес, сывлӑха сыхлас тата социальнӑй обеспеченипе страховани ӗҫӗсем валли кӑҫал 129,8 миллиард тенкӗ, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан 7 миллиард тенкӗ ытларах расходлама палӑртнӑ.

Партипе правительство хӑйсем умне халӑхӑн ҫурт-йӗр условийӗсене малалла лайӑхлатас задача кӑларса тӑратрӗҫ. Государство енӗпе ҫурт-йӗрсем тума кӑҫал иртнӗ ҫулхинчен 25 процент ытларах укҫа-тенкӗ уйӑрса параҫҫӗ.

Совет бюджечӗн тупӑшӗсен тӗп пайӗ вӑл—социализмла предприятисемпе организацисенчен килсе тӑнӑ тата халӗ те килсе тӑракан укҫа-тенкӗ пулать. Халӑхран пухакан налогсемпе ытти укҫа-тенкӗ пирӗн ҫӗршывӑн бюджетӗнче пӗчӗк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. ССР Союзӗн 1953 ҫулхи Государство бюджечӗ иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан социализмла хуҫалӑхран килекен тупӑшсене малалла ӳстерме, ҫав вӑхӑтрах халӑхран килекен тупӑшсене чакарма палӑртать. Ҫавӑн пек, государство предприятийӗсемпе организацийӗсен тупӑшӗнчен уйӑрса паракан укҫа-тенкӗ кӑҫалхи ҫул 22,2 миллиард тенкӗ пулать е 37,9 процент ӳсет.

Ялхуҫалӑх налогӗ ҫинчен калакан ҫӗнӗ Закон проектӗнче ялхуҫалӑх налогне чылай чакарма палӑртнӑ. 1953 ҫулта ҫак налог сумми 43 процент, ҫитес 1954 ҫулта вара, 1952 ҫулхипе танлаштарсан, икӗ хут ҫурӑ ытла чакать. Правительство иртнӗ ҫулсенче ялхуҫалӑх енӗпе пулнӑ мӗнпур парӑм укҫисене каҫарттармалла тунӑ.

Ялхуҫалӑх налогӗ ҫинчен калакан ҫӗнӗ Закон колхозсене организаципе хуҫалӑх ӗҫӗсем енӗпе тӗреклетме, ялхуҫалӑхне малалла аталантарма тата колхозниксен тупӑшне ӳстерме пулӑшать.

Социализмла хуҫалӑхран илекен тупӑшсене ӳстермелле туни хуҫалӑх органӗсен руководителӗсене государство умӗнчи финанс обязательствисене вӑхӑтра тата туллин пурнӑҫлама хушать. Кашни предприяти енчен продукцие пысӑк пахалӑхпа, палӑртнӑ ассортимент тӑрӑх кӑларас тӗллӗшпе производство планне тултарса пыни, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетмелли задание тултарни, хуҫалӑх расчетне пур майсемпе те тӗреклетни, перекетлӗх режимне ҫирӗп тытса пыни кирлӗ.

Сессире палӑртнӑ тӑрӑх, иртнӗ ҫул хӑшпӗр министерствӑсем, уйрӑмах вӑрманпа хут промышленность, ҫӗр кӑмрӑк промышленность, ҫӑмӑл тата апат-ҫимӗҫ промышленность министерствисем, транспортпа йывӑр машиностроени министерстви накоплени тумалли плансене тата бюджет умӗнчи хӑйсен обязательствисене тултарса ҫитереймен. Чылай строительство организацийӗсем строительство ӗҫӗсене йӳнетмелли задание тултарман. Машина-трактор станцийӗсем тракторпа тумалли ӗҫсен хакне ӳстерни. Ҫакнашкал ҫитменлӗхсене тӳсме ҫук. Перекетлӗх режимне ҫирӗппӗн пурнӑҫласа пырас ыйтусем ҫине партипе хуҫалӑх организацийӗсем яланах тимлӗн пӑхмалла.

1953 ҫулхи Государство бюджетне ӑнӑҫлӑн тултарни пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн экономикӑлла хӑватне малалла тӗреклетме, совет халӑхӗн материальнӑй пурнӑҫне вӗҫӗмсӗр лайӑхлатса пыма тата культурине хӑпартма, коммунизм обществи тӑвас ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума пулӑшать.

Государствӑна—тырӑ

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Районти колхозсем тырпула хӑвӑрт пухса кӗртессишӗн тата государствӑна тырӑ памалли плана срокчен тултарассишӗн социализмла ӑмӑртӑва вӑйлатса пыраҫҫӗ. Ҫак ӑмӑртура пӗрремӗш вырӑна «Партизан» колхоз йышӑнать. Колхоз ӗҫченӗсем тӗштырӑсене 70 процент ытла вырса пухнӑ. Кунта кӗлте турттарассине тата авӑн ҫапассине малтанхи кунсенчех йӗркеленӗ. Август уйӑхӗн малтанхи пилӗккунлӑхӗнче государствӑна тырӑ памалли графика ирттерсе тултарнӑ.

«Сталинец» ялхуҫалӑх артелӗ хатӗрлев пунктне 4 машинӑпа тырӑ турттарать. Июль уйӑхӗнчи графика артель виҫӗ хута яхӑн ирттерсе тултарчӗ, август уйӑхӗн малтанхи пилӗккунлӑхӗнче те хӑвӑртлӑха чакармарӗ.

«Красное Сормово» колхозри А. Кузьминпа А. Грачев шоферсем хатӗрлев пунктне кашни кун икшер хут хутлаҫҫӗ, 7—8 тонна тырӑ леҫеҫҫӗ. Колхоз иртнӗ пилӗккунлӑхри графика ытлашшипех тултарчӗ.

СТРОИТЕЛЬСЕМ ВАЛЛИ ПУРӐНМАЛЛИ ҪУРТСЕМ

Шупашкарта строительство ӗҫӗ анлӑ сарӑлса пырать. Строительствӑра ӗҫлекен рабочисен пурнӑҫӗпе йӑла условийӗсене лайӑхлатас тӗллӗшпе хулара пурӑнмалли ҫуртсем чылай тӑваҫҫӗ. Чугун ҫул станцийӗ сывлӑхӗнче халӗ икӗ хутлӑ тӑватӑ ҫурт лартаҫҫӗ. Ҫак ҫуртсене кӑҫал туса пӗтерсе, унта 120 строитель ҫемйине вырнаҫтармалла.

Электроаппаратура завочӗ те 400 ҫын валли общежити тӑвать. Ҫак ҫуртра чи малтан завод поликлиникине, ҫавӑн пекех ытти строительствӑсенче ӗҫлекен рабочисене вырнаҫтараҫҫӗ.

СССР Верховнӑй Совечӗн ларӑвӗсем

Национальноҫсен Совечӗн 1953 ҫулхи августӑн 6-мӗшӗнче пулнӑ ларӑвӗ ҫинчен ИНФОРМАЦИЛЛӖ ПӖЛТЕРӲ

Августӑн 6-мӗшӗнче, ирхине 11 сехетре, Кремльте, Кремльти Пысӑк дворецра, Национальноҫсен Совечӗн иккӗмӗш ларӑвӗ пулнӑ.

Лару председателӗ — Национальноҫсен Совечӗн Председателӗ **Ж. Шаяхметов** депутат.

Национальноҫсен Совечӗ Национальноҫсен Совечӗн Бюджет комиссийӗн председателӗн **И. С. Хохлов** депутатӑн содокладне итленӗ.

Бюджет комиссийӗн содоклачӗ хыҫҫӑн, ССР Союзӗн 1953 ҫулхи Государство бюджечӗ ҫинчен тата ССР Союзӗн 1951 ҫулхипе 1952 ҫулхи бюджечӗсене пурнӑҫлани ҫинчен тунӑ доклад тӑрӑх пренисем пуҫланнӑ.

Пренире ҫаксем тухса каланӑ: **В. Т. Лацис** депутат (Латви ССР-ӗ, Кировски округ), **Н. А. Михайлов** депутат (РСФСР, Ставрополь округӗ), **Ш. Рашидов** депутат (Узбек ССР-ӗ, Джизак округӗ), **Н. Е. Авхимович** депутат (Белорус ССР-ӗ, Рогачево округӗ), **Г. Ш. Каржаубаев** депутат (Казах ССР-ӗ, Зайсан округӗ), **П. Г. Тычина** депутат (Украина ССР-ӗ, Киев округӗ), **М. З. Азизов** депутат (Тутар АССР-ӗ, Ҫӗнӗ Шешма округӗ), **П. Н. Косыгин** депутат (РСФСР, Иваново округӗ), **Г. Я. Рудь** депутат (Молдаван ССР-ӗ, Дрокиевски округ), **Ф. З. Загафуранов** депутат (Пушкӑрт АССР-ӗ, Белорецки округ).

Ҫакӑнпа Национальноҫсен Совечӗн иккӗмӗш ларӑвӗ хупӑнать.

Союз Совечӗн 1953 ҫулхи августӑн 6-мӗшӗнче пулнӑ ларӑвӗ ҫинчен ИНФОРМАЦИЛЛӖ ПӖЛТЕРӲ

Августӑн 6-мӗшӗнче, каҫхине 6 сехетре, Кремльте, Кремльти Пысӑк дворецра Союз Совечӗн иккӗмӗш ларӑвӗ пулнӑ.

Лару председателӗ — Союз Совечӗн Председателӗ **М. А. Яснов** депутат.

Союз Совечӗ Союз Совечӗн Бюджет комиссийӗн председателӗ **Л. Р. Корниец** депутатӑн содокладне итленӗ.

Бюджет комиссийӗн содоклачӗ хыҫҫӑн, ССР Союзӗн 1953 ҫулхи Государство бюджечӗ ҫинчен тата ССР Союзӗн 1951 ҫулхипе 1952 ҫулхи бюджечӗсене пурнӑҫлани ҫинчен тунӑ доклад тӑрӑх пренисем пуҫланнӑ.

Пренире ҫаксем тухса каланӑ: **А. М. Пузанов** депутат (Куйбышев облаҫӗ, Кинель округӗ), **Н. Т. Кальченко** депутат (Украина ССР-ӗ, Житомир ял округӗ), **П. Ф. Ладанов** депутат (Ленинград облаҫӗ, Волхов округӗ), **К. Т. Мазуров** депутат (Белорус ССР-ӗ, Дрогичински округ), **М. А. Гедвилас** депутат (Литва ССР-ӗ, Каунас округӗ), **П. К. Пономаренко** депутат (Белорус ССР-ӗ, Минск ял округӗ), **Е. Б. Тайбеков** депутат (Казахстан ССР-ӗ, Молотов округӗ), **Т. И. Антропова** депутат (Калинин облаҫӗ, Вышний Волочӗк округӗ), **В. М. Бакрадзе** депутат (Грузи ССР-ӗ, Кутаиси округӗ).

Союз Совечӗн иккӗмӗш ларӑвӗ ҫакӑнпа хупӑннӑ. (ТАСС).

Национальноҫсен Советӗнче

Августӑн 6-мӗшӗнче Кремльти Пысӑк дворецра СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗ хӑйӗн ӗҫӗсене малалла туса пынӑ.

11 сехет. Национальноҫсен Совечӗн ларӑвӗ пуҫланать. Председатель сӗтелӗ хушшинче — Национальноҫсен Совечӗн Председателӗ **Ж. Шаяхметов** депутат, Председатель заместителӗсем **М. Т. Якубов, В. Т. Лацис, В. М. Зимянин, Т. М. Матиашвили** депутатсем.

Правительство ложисене **Г. М. Маленков, Н. С. Хрущев, К. Е. Ворошилов, Н. А. Булганин, А. И. Микоян** юлташсем тухаҫҫӗ. Депутатсемпе хӑнасем вӗсене нумайччен алӑ ҫупса кӗтсе илеҫҫӗ.

Содоклад тума палатӑн Бюджет комиссийӗн Председательне **И. С. Хохлов** депутата сӑмах параҫҫӗ. Вӑл ҫапла калать: Бюджет комиссийӗ ССР Союзӗн 1953 ҫулхи Государство бюджечӗн проектне пур енчен те пӑхса тухрӗ, комисси ӑна Бюджет комиссийӗ кӗртнӗ тӳрлетӳсемпе пӗрле ҫирӗплетме сӗнет.

Бюджет комиссийӗн содоклачӗ хыҫҫӑн ССР Союзӗн Государство бюджетне сӳтсе явма тытӑнаҫҫӗ. Депутатсем ҫакна палӑртаҫҫӗ: ҫӗнӗ бюджет капитальнӑй строительствӑн пысӑк ӗҫӗсене пурнӑҫлама, промышленноҫа, ялхуҫалӑхне, транспорта, халӑха вӗрентес ӗҫе, наукӑна, сывлӑха сыхлас ӗҫе, социальнӑй обеспечени ӗҫне малалла аталантарма укҫа-тенкӗ кирлӗ таран парса тӑма май парать.

Малтан **В. Т. Лацис** депутат (Латви ССР-ӗ) сӑмах илет.

— СССР Верховнӑй Совечӗн хальхи ларӑвӗ,— тет вӑл,— парти, правительство тата халӑх хӑйсен аслӑ пӗрлӗхне хӑватлӑн кӑтартнӑ лару-тӑрура пулса иртет. Ҫак пӗрлӗх тата тӑванла халӑхсен туслӑхӗ ҫирӗп никӗс пулса тӑраҫҫӗ. Ҫак ҫирӗп никӗс пур чухне пирӗншӗн шалти тӑшмансем те, тулашри тӑшмансем те хӑрушӑ мар. Пирӗн ҫӗршыври халӑхсем пӗрлӗхлӗ, вӗсем Коммунистсен партийӗ, унӑн Центральнӑй Комитечӗ тавра, Совет Правительстви тавра пӗтӗҫсе тӑраҫҫӗ. Вӗсем парти туса хатӗрленӗ политикӑна чӗререн ырласа йышӑнаҫҫӗ.

Совет Союзӗнчи халӑхсен тӑванла ҫемйинче латыш халӑхӗ хуҫалӑхпа культурӑна малалла аталантарассишӗн ӑнӑҫлӑ кӗрешет. 1946 ҫулхипе танлаштарсан, республика халӑх хуҫалӑхне аталантарма паракан укҫа кӑҫал 34 процент таран ӳсет, халӑха вӗрентес, сывлӑха сыхлас тата социальнӑй обеспечени ӗҫӗсем валли тухакан расход икӗ хута яхӑн ӳсет.

Юлашкинчен Лацис юлташ Бюджет комиссийӗ кӗртнӗ тӳрлетӳсемпе пӗрле СССР Государство бюджетне ҫирӗплетме сӗнет.

Н. А. Михайлов депутат ҫапла калать: ССР Союзӗн ҫӗнӗ бюджечӗ совет халӑхӗн интересӗсене палӑртса тӑрать, вӑл социализмла государствӑн хӑвачӗпе вӑйӗсене малалла тӗреклетме, экономикӑна, культурӑна тата наукӑна вӑйлатма, ӗҫҫыннисен материальнӑй пурнӑҫне тӑтӑш лайӑхлатса пыма тата культурӑллӑ шайне ӳстерме пулӑшать.

Михайлов юлташ Мускаври тата Мускав облаҫӗнчи предприятисенче производство вӗҫӗмсӗр ӳссе пыни ҫинчен, ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ӳсни, продукцин хӑйне ларакан хакӗ чакни тата продукци пахалӑхӗ лайӑхланни ҫинчен каласа парать. Вӑл столицӑра пурӑнмалли ҫурт-йӗр тӑвас ӗҫ вӑйланса пыни ҫинчен каласа парать. Мускава реконструкцилемелли генеральнӑй план ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗрсе пырать. Иртнӗ икӗ ҫул хушшинче пурӑнмалли ҫуртсем пӗр миллион ҫурӑ тӑваткал метр чухлӗ ытла туса пӗтерни, культурӑпа йӑла учрежденийӗсем нумай тунӑ. Кӑҫал Мускавра капитальнӑй ӗҫсем тума 5 миллиард тенкӗ ытла укҫа уйӑрса панӑ.

Михайлов юлташ облаҫри ялхуҫалӑхне аталантарас ыйтусем ҫинче тӗплӗн чарӑнса тӑрать.

— Пирӗн Тӑван ҫӗршыври ӗҫҫыннисем,— тет юлашкинчен Михайлов юлташ,— хӑйсен вӑйне, хӑйсен ыранхи кунне, хӑйсен малашлӑхне шанса тӑраҫҫӗ. Совет Союзӗ ертсе пыракан мирпе демократи лагерӗ тунӑ ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем ырӑ шухӑшлӑ мӗнпур ҫынсен чӗрине мир ӗҫне пӗтӗм тӗнчипе сыхласа хӑварма, халӑхсем хушшинчи туслӑха ҫирӗплетме шанӑҫ параҫҫӗ.

Ш. Рашидов депутат (Узбек ССР-ӗ) СССР Государство бюджечӗ коммунизм обществи тӑвакан тӑванла халӑхсен пӗрлӗхлӗ экономики ҫинче никӗсленсе тӑнине палӑртать. Парти туса хатӗрленӗ ленинла-сталинла наци политики Узбек халӑхӗ кӗске срокра промышленноҫра, ялхуҫалӑхӗнче, культура строительствинче тунӑ пысӑк улшӑнусенче уҫҫӑн палӑрса тӑрать. Республикӑра промышленноҫӑн ҫӗнӗ отраслӗсене: ҫӗр кӑмрӑк, нефть, хими, металлурги, машиностроени отраслӗсене тата ыттисене туса хунӑ. Ялхуҫалӑхне, уйрӑмах ҫӗр мамӑкӗ акса тӑвас ӗҫе аталантарас тӗллӗшпе ҫитӗнӳсем тунӑ май Узбекистанри колхозсем пурте тенӗ пекех миллионерсем пулса тӑчӗҫ.

Рашидов юлташ ялхуҫалӑх налогӗ ҫинчен хатӗрленӗ закон проектне ырлать. Ҫӗнӗ закон, тет вӑл, ял халӑхӗн материальнӑй пурнӑҫне малалла лайӑхлатасси патне илсе пырать, вӑл колхозсене организаципе хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен тӗреклетес тата ҫӗршывӑн апат-ҫимӗҫ ресурсӗсене ӳстерес ӗҫре пысӑк мероприяти пулса тӑрать.

Н. Е. Авхимович депутат (Белорус ССР-ӗ) юлашки ҫулсенче Белоруссире промышленность, ялхуҫалӑхӗ тата культура енӗпе тунӑ ҫитӗнӳсем ҫинчен каласа парать. Республикӑра промышленность производствин шайӗ вӑрҫӑччен шайран пӗр хут ҫурӑ иртсе кайнӑ ӗнтӗ. Ялхуҫалӑхне техникӑпа хӗҫпӑшаллантарасси ҫултан-ҫул ӳссе пырать. Колхозсен обществӑлла пуянлӑхӗ ӳсет, колхозниксен экономикӑлла пурнӑҫӗ лайӑхланать.

— Пирӗн правительство Совет Союзӗн шалти тата тулашри политики енӗпе ирттерекен ӗҫсем,— тет Авхимович депутат,— пӗтӗм тӗнче умӗнче ҫакна кӑтартса пачӗҫ: пирӗн ҫӗршыва тытса тӑрас ӗҫ пирӗн партин ертсе пыракан ленинла-сталинла чӑмӑрӗн шанчӑклӑ аллинче тӑрать. Тӑшмансемпе вӗсен агентури темӗн хӑтлансан та пирӗн халӑхӑн хӑватне, пӗрлӗхне тата пӗтӗҫӳлӗхне хавшатма пултараймӗҫ.

Г. Ш. Каржаубаев депутат (Казах ССР-ӗ) социализмла нацисен тӑванла туслӑхӗн пысӑк пӗлтерӗшне палӑртать. Социализмла нацисем пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлени ҫӗршывӑн экономикипе культурине вӗҫӗмсӗр ӳстерсе пыма, Совет Союзӗн тӗнчери авторитечӗпе влиянине ӳстерме май парать.

Депутат Казахстанри ӗҫҫыннисем халӑх хуҫалӑхне аталантарас тӗллӗшпе тунӑ ҫитӗнӳсем ҫинчен калакан цифрӑсемпе фактсем илсе кӑтартать. Вӑл Металлурги промышленность министерствипе Строительство министерствине критиклет. Ҫак министерствӑсем республикӑри металлурги промышленноҫне аталантарасси тата тимӗр тӑпри кӑларас ӗҫе вӑйлатасси ҫине кирлӗ пек пӑхмаҫҫӗ. СССР Электростанцисемпе электропромышленность министерстви республикӑра ҫӗнӗ электростанцисем тӑвас тата кивӗ станцисене аслӑлатас ӗҫсем ҫине тимлӗн пӑхмасть.

Каржаубаев юлташ ҫапла калать: Казах ССР-ӗнчи ӗҫҫыннисем халӑх хуҫалӑх планне тата ССР Союзӗн 1953 ҫулхи Государство бюджетне тултармалла тата ирттерсе тултармалла тӑвас тӗллӗшпе хӑйсен пӗтӗм вӑйӗсене хурса ӗҫлӗҫ.

Украинӑри паллӑ писатель **П. Г. Тычина** депутат ҫакна палӑртать: Украина халӑхӗ хӑйӗн пурнӑҫ опытӗнчен Совет Союзӗнчи халӑхсен туслӑхӗн пурнӑҫлӑ вӑйне туйса илчӗ. Вӑл Украина халӑхӗпе аслӑ вырӑс халӑхӗ нумай ӗмӗрсем хушши туслӑ пурӑнни ҫинчен каласа парать. Ҫак туслӑхсӑр Украина ют ҫӗршывсен нумай йышлӑ захватчикӗсем тапӑннине тӳссе тӑрайман пулӗччӗ.

Тычина депутат культура строительствин ыйтӑвӗсем ҫинче чарӑнса тӑрать. Хальхи вӑхӑтра Украинӑра пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан шкулсем 30 пине яхӑн шутланаҫҫӗ. Вӗсенче 6 миллион ытла ача вӗренет. Закарпатски облаҫре, вӑл Совет Украинипе пӗрлешнӗ хыҫҫӑн, вӑтам шкулсен шучӗ 10 хут, ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулсен шучӗ 18 хут ӳснӗ. Республикӑри Наука академийӗ хальхи вӑхӑтра 500 ытла наукӑлла учрежденисене пӗрлештерсе тӑрать. Вӗсенчен нумайӑшӗ юлашки вӑхӑтра наука енӗпе чылай пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ.

М. З. Азизов депутат Тутар АССР-ӗнчи ӗҫҫыннисем, пӗтӗм халӑхпа пӗрле, мирлӗ ӗҫре ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тӑвассишӗн ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлени ҫинчен калать. Республика промышленноҫӗ продукци туса кӑларасси 1952 ҫулта, 1940 ҫулхипе танлаштарсан, 318 процент ӳснӗ, капитальнӑй ӗҫсем тума укҫа-тенкӗ хывасси, вӑрҫӑччен шайпа танлаштарсан, 4 хут ытла ӳснӗ. Тутар республикинче нефть промышленноҫӗ ӑнӑҫлӑ аталанса пырать. Ҫурт-йӗрпе коммунальнӑй хуҫалӑх, халӑха медицина пулӑшӑвӗ парасси лайӑхланать, культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсен шучӗ ӳсет.

Азизов юлташ республикӑри нефть промышленноҫне укҫа-тенкӗ парса тӑрас ыйтусем тӗлӗшпе чылай сӗнӳсем парать.

СССР Ҫӑмӑл тата апат-ҫимӗҫ промышленность министрӗ **А. Н. Косыгин** сӑмах илет. Вӑл 1953 ҫулхи бюджет Совет государствин мирлӗ политикине палӑртса тӑни ҫинчен, партипе правительство ӗҫҫыннисен пурнӑҫне лайӑхлатассишӗн ывӑнма пӗлмесӗр тӑрӑшни ҫинчен калать.

Косыгин депутат куллен кирлӗ таварсем туса кӑларасси ҫӗнӗрен ӳсни ҫинчен калакан нумай тӗслӗхсем илсе кӑтартать. Кӑҫал Правительство кӑтартса панипе министерство предприятийӗсем халӑх валли малтан палӑртнинчен 10 миллиад тенкӗ яхӑн нумайрах таварсем туса кӑлараҫҫӗ. Пурҫӑн пир-авӑр ертсе хатӗрлекен предприятисем ҫӗршыва 1940 ҫулхинчен 6 хут ытларах тавар параҫҫӗ. Ҫӑм пир-авӑр, уйрӑммӑн илсен—костюмсемпе пальтосем ҫӗлемелли паха материалсем туса кӑларасси ӳсет.

Косыгин юлташ апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗ аталанни ҫинчен каласа парать. Кӑҫал ӗҫҫыннисем выльӑх-чӗрлӗх ҫӑвӗ, 1940 ҫулхипе танлаштарсан, икӗ хут ытларах, сахӑр, кондитерски изделисем 1,7 хут ытларах илеҫҫӗ. Апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗнче ҫӗнӗрен 568 предприяти туса лартаҫҫӗ тата 250 предприятие реконструкцилеҫҫӗ.

Г. Я. Рудь депутат (Молдаван ССР-ӗ) Советлӑ Молдавин тӗслӗхӗ тӑрӑх Коммунистсен партийӗн наци политики чаплӑн ҫӗнтернине кӑтартса парать. Республикӑра промышленность, ялхуҫалӑхӗ, халӑх культури питех те пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе аталанать. Уйрӑмах апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗ хытӑ вӑйланать. Апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗ валли республикӑра чӗртаварӑн пысӑк никӗсӗ пур. Республикӑра 160 пин гектар ытла садсемпе виноградниксем ӗрчетеҫҫӗ.

Рудь депутат ҫакна палӑртать: Молдаван ССР-ӗнче апат-ҫимӗҫ туса кӑларакан ҫӗнӗ предприятисем тӑвас ӗҫ часчасах Ҫӑмӑл тата апат-ҫимӗҫ промышленность министерстви ҫӗнӗ стройкӑсене техникӑлла документаци вӑхӑтра тӑратман пирки чарӑнса тӑрать.

Ф. З. Загафуранов депутат (Пушкӑрт АССР-ӗ) республикӑра нефть промышленноҫӗ хӑвӑрттӑн аталанса пыни ҫинчен калать. Ҫакна май вӑл нефтяниксем валли пурӑнмалли ҫурт-йӗр тата культурӑпа йӑла строительствине ӳстерме кирли ҫинчен ыйту лартать.

Загафуранов депутат ССР Союзӗн 1953 ҫулхи Государство бюджетне ырлать.

Загафуранов депутат тухса каланӑ хыҫҫӑн Национальноҫсен Совечӗн ларӑвӗ хупӑнать. Ҫитес лару августӑн 7-мӗшӗнче каҫхине 6 сехетре уҫӑлать. (ТАСС).

Союз Советӗнче

Августӑн 6-мӗшӗнче каҫхине 6 сехетре Кремльти Пысӑк дворецра Союз Совечӗн ларӑвӗ пулнӑ.

Председатель сӗтелӗ хушшинче—Союз Совечӗн Председателӗ **М. А. Яснов** депутат, Председатель заместителӗсем — **А. И. Кириченко, Т. М. Зуева, А. Ю. Снечкус, А. И. Ниязов** депутатсем.

Правительство ложисенче **Г. М. Маленков, В. М. Молотов, Н. С. Хрущев, К. Е. Ворошилов, Л. М. Каганович, М. З. Сабуров, М. Г. Первухин** юлташсем. Вӗсене нумайччен алӑ ҫупса кӗтсе илнӗ.

Лару председателӗ содоклад тума палатӑн Бюджет комиссийӗн председательне **Л. Р. Корниец** депутата сӑмах парать. Л. Р. Корниец депутат Бюджет комиссийӗ кӗртнӗ тӳрлетӳсемпе пӗрле ССР Союзӗн 1953 ҫулхи Государство бюджетне ҫирӗплетме сӗнет.

Кун хыҫҫӑн Союз Совечӗ ССР Союзӗн 1953 ҫулхи Государство бюджечӗн проектне сӳтсе явма тытӑнать.

А. М. Пузанов депутат (РСФСР) сӑмах илет. Вӑл ҫапла калать: Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗн решенийӗсене пурнӑҫласа, пирӗн халӑх социализмла экономикӑпа культурӑна аталантарас ӗҫре, хӑйӗн аслӑ Тӑван ҫӗршывне — пӗтӗм тӗнчери мир тӗрекне малалла тӗреклетес ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем турӗ.

Партипе правительство халӑхӑн ялан ӳссе пыракан материальнӑй тата культурӑллӑ ыйтӑвӗсене туллин тивӗҫтерессишӗн ывӑнма пӗлмесӗр тӑрӑшнине кӑтартакан тӗслӗх вӑл, тет депутат, кӑҫал апат-ҫимӗҫпе промышленность таварӗсен ваккӑн сутмалли хакӗсене ҫӗнӗрен йӳнетни, ҫавӑн пекех тата проектра бюджета халӑхран кӗрекен укҫа-тенкӗне чакарма тата ялхуҫалӑх налогне чылай чакарма палӑртни пулса тӑрать. Россия Федерацийӗнче кӑна ялхуҫалӑх налогӗ кӑҫал, пӗтӗмӗшпе илсен, 2.450 миллион тенкӗ чухлӗ чакать. Ҫак паха ӗҫ вӑл ялхуҫалӑхне малалла аталантарма тата пирӗн ҫӗршывра апат-ҫимӗҫпе чӗртавар ресурсӗсене ӳстерме пулӑшать.

Россия Федерацийӗн бюджечӗ ҫинчен каласа, Пузанов депутат халӑх хуҫалӑхне хывакан пӗтӗм укҫа-тенкӗрен 80 процентне яхӑн социальнӑй тата культура ӗҫӗсем валли, пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммунальнӑй хуҫалӑха вӑйлатма каять.

Республикӑпа вырӑнти, куллен кирлӗ таварсем хатӗрлекен промышленноҫа малалла аталантарма укҫа-тенкӗ нумай параҫҫӗ.

Пузанов юлташ ССР Союзӗн 1953 ҫулхи Государство бюджечӗн проектне тата 1951 ҫулхипе 1952 ҫулхи бюджета пурнӑҫлани ҫинчен калакан отчета ҫирӗплетме сӗнет.

Н. Т. Кальченко депутат (Украина ССР-ӗ) бюджет проектӗнче Совет государствин пысӑк ҫитӗнӗвӗсем палӑрса тӑнине кӑтартать. Вӑл Совет Украининчи халӑх хуҫалӑхӗне, культура аталанӑвӗнче тунӑ ҫитӗнӳсем ҫинчен калакан фактсемпе цифрӑсене илсе кӑтартать. Республикӑра чугун тата хурҫӑ шӑратса кӑларасси,

(Юлашки 2-мӗш страницӑра).

СССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔСЕМ

Союз Советĕнче

(Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

тимĕр тата марганец тăпри кăларасси, электроэнерги, тракторсем, молотилкăсем, кăшман кăлармалли комбайнсем, куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси чылай ÿснĕ. Колхозсем, совхозсем, машина-трактор станцийĕсем кăçалхи çураки ĕçсене ăнăçлă вĕçлерĕç. Кĕрхи тулă, сахăр кăшманĕ, йĕтĕн-долгунец, çĕрулми, пахча çимĕç тата ытти культурăсем акакан çĕр лаптăкĕ ÿснĕ. Ялхуçалăхĕнче механизаци вăйланса пырать.

Кальченко юлташ машина-трактор станцийĕсен ĕçне лайăхлатас, вĕсем валли пысăк квалификациллĕ кадрсем хатĕрлес ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе чылай сĕнÿсем тăратать.

П. Ф. Ладанов депутат Ленинград хулипе Ленинград облаçĕнчи ĕçсынниссем партин XIX-мĕш съезчĕ лартнă задачăсене, пилĕк çуллăх плана ăнăçлă пурнăçласа пыни çинчен каласа парать. Ленинград хулипе облаçĕнчи промышленность кăçалхи çулăн малтанхи çурçуллăх планне 102,3 процент тултарнă. Вырăнти тата кооперации промышленноçĕ хальхи вăхăтра виçĕ пин çурă ытла тĕрлĕ япаласем туса кăларать. Таварсен ассортиментне ÿсет, вĕсен пахалăхĕ лайăхланать.

Социализм çĕршывĕн бюджечĕ, тет Ладанов юлташ, социализмла государствăн экономикăлла хăвачĕ вĕçĕмсĕр ÿссе пынине, производительнăй вăйсем пысăк хăвăртлăхсемпе аталанса пынине, хуçалăхăн социализмла системи капитализмла системăран чылай малта тăнине кăтартса парать.

К. Т. Мазуров депутат (Белорус ССР-ĕ) çапла калать: капитализмла çĕршывсенче çар бюджечĕсем çултан-çул ÿссе пыраççĕ пулсан, ĕççыннисен ахаль те начар пурнăçĕ татах та ытларах начарланса пырать пулсан, пирĕн çĕршывра пăчах урăхла, халăх пурлăхĕ мирлĕ экономикăна аталантарма, производительнăй вăйсене малалла çĕклентерсе пыма, совет çыннисен ÿссе пыракан материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтерме каять.

Ленинла-сталинла наци политикине çирĕп пурнăçласа пырса, Совет правительстви союзлă республикăсен халăх хуçалăхĕпе культурине малалла ÿстерме кирлĕ ĕçсем туса иртерет. Çакна пула Белорус халăхĕ республика хуçалăхне кĕске срокра юсаса çитерчĕ, ăнăçлăн малалла аталантарса пырать. Иртнĕ çулăн вĕçĕ тĕлне промышленность производстви вăрçăччен хи шайран пĕр хут çурă иртсе кайрĕ. Ялхуçалăхĕ вăйланса пырать.

Çакăнпа пĕрлех депутат республика промышленноçĕпе ялхуçалăхĕн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртать. Колхозсен пĕр пайĕ çаплах пĕчĕк тухăçлă тырпул туса илет, обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плансем тултармаççĕ.

М. А. Гедвилас депутат (Литва ССР-ĕ) Литвари ĕççыннисем тунă çитĕнÿсем çинче чарăнса тăрать. Республикăри промышленность производстви, вăрçăченхи 1940 çулхипе танлаштарсан, виçĕ хут ытла ÿснĕ. 1952 çулта, унччешхи çулхипе танлаштарсан, промышленность 18 процент ытларах продукци туса кăларнă. Электроэнерги, металл касакан станоксем, пăс турбинисем, электромоторсем, велосипедсем, строительство материалĕсем, хут, сĕтел-пукан, пир-авăр туса кăларасси чылай ÿснĕ. Çак продукцисене чылайăшне, тет Гедвилас юлташ, буржуалла Литва вăхăтĕнче туса кăларман.

Гедвилас юлташ СССР Электростанцисемпе электропромышленность, Сыхăну тата Строительство министерствисен ĕçне халăх хуçалăхĕ тĕлĕшпе тăракан чылай ыйтусем тăрăх республикăна çителĕксĕр пулăшнăшăн критиклет.

— Советлă Литва республикинчи ĕççыннисем, — тет депутат, — партин XIX-мĕш съезчĕ кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлассишĕн, нумай нациллĕ Совет государствине малалла тĕреклетсе пыма, Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин хушса хăварнисене пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕç.

ССР Союзĕн 1953 çулхи Государство бюджечĕн проекчĕ, тет СССР Культура министрĕ **П. К. Пономаренко** депутат, социальнăй тата культурăллă ĕçсем валли 129,8 миллиард тенкĕ, иртнĕ çулхинчен 7 миллиард тенкĕ ытларах укçа пама палăртать.

Ку ĕçсем валли çакăн чухлĕ нумай укçа пама совет строй ĕн условийĕсенче кăна май килет. Социализмла государство пĕтĕм общество культурине çĕклентерсе пырать. Кăçал халăха вĕрентес ĕç малалла аталанать. Пуçламăш, сичĕ çул вĕренмелли тата вăтам шкулсенче вĕренекенсен йышĕ 900 пин çынна çитет. 1950 çулхипе танлаштарсан, вăтам шкулсенчен вĕренсе тухакансен шучĕ икĕ хут ÿсет.

Халăха вĕрентес ĕçре тунă пысăк çитĕнÿсем рабочи класпа хресченсен культурăллă шайне халиччен истори курман çÿлĕ шая çитерме май пачĕ. Тĕслĕхрен, çĕр кăмрăк промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисенчен сурри вăтам шкулсенчен е ФЗО шкулĕсемпе ремесла училищисенче вĕренсе тухнă. Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автозаводра ĕçлекен рабочисенчен 70 проценчĕ вăтам пĕлÿ илнĕ рабочисем пулса тăраççĕ.

Пономаренко юлташ культурăпа çутĕç ĕçĕнчи тата совет искусствин аталанăвĕнчи татса паман задачăсем çинчен калать. Правительство решенийĕсенче тата партин XIX-мĕш съездĕнче палăртнă пысăк çитменлĕхсем искусство ĕçĕнче халĕ те пур-ха. Çак çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле пулать.

Е. Б. Тайбеков депутат казах халăхĕ социализм строительствинче тунă çитĕнÿсем çинчен каласа парать. Казахстанра малта пыракан техникăпа хĕçпăшалланнă пысăк заводсемпе фабрикăсем, шахтăсемпе рудниксем, электростанцисемпе нефть кăлармалли вышкăсем, чугун çул уçелĕсемпе промышленность стройкисем нумайланнă. Малта пыракан техникăпа хĕçпăшалланнă социализмла ялхуçалăхĕ туса хăçлăрах ĕçлеме пуçланă. Пиншер пуçламăш, сичĕ çул вĕренмелли тата вăтам шкулсемпе пĕрлех, республикăра 29 аслă шкул, 100 яхăн тĕрлĕ наукăпа тĕпчев учрежденийĕсем ĕçлесе тăраççĕ, сывлăхпа культура учрежденийĕсем, клубсемпе библиотекăсем нумай уçнă.

Тайбеков юлташ çак çитĕнÿсене вĕсене Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ çирĕп пулнипе, аслă вырăс халăхĕ тăтăш пысăк пулăшу парса тăнипе туни çинчен калать. Вăл ССР Союзĕн 1953 çулхи Государство бюджетне çирĕплетме сĕнет.

Т. И. Антропова депутат (Калинин облаçĕ) хамăрăн аслă Тăван çĕршывăн мухтавĕпе хавхаланса чĕререн сăмах калать. Совет çыннисем, тет вăл, тата лайăхрах, тухăçлăрах ĕçлеме тăрăшаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен ĕçĕ социализмла общество ырлăхĕшĕн пулнине пĕлеççĕ. Хамăршăн ĕçлени чаплă çитĕнÿсем кÿрет.

Вăл облаçри хуçалăх аталанса пыни çинчен, ĕççыннисен материальнăй пурнăçĕ лайăхланни тата культурăллă шайĕ ÿссе пыни çинчен калать. Çакăн çинчен область бюджечĕ ÿссе пыни питĕ лайăх кăтартса парать. Вăл вăрçă хыççăнхи çулсенче 60 процент ÿснĕ. Халăха вĕрентме, сывлăха сыхлама тата социальнăй обеспечени ĕçне лайăхлатма тухакан расход юлашки çулсенче пĕтĕм бюджетра 78 процент таран йышăнса тăрать.

Антропова юлташ хăйĕн сăмахĕнче облаçри хуçалăх ыйтăвĕсем çинче нумай чарăнса тăрать.

Юлашкинчен ларура **В. М. Бакрадзе** (Грузи ССР-ĕ) тухса калать. Вăл Грузи ССР халăх хуçалăхĕпе культура аталанса пыни çинчен каласа парать. Республика промышленноçĕ кăçалхи çур çул планне иртерсе тултарнипе çĕршыва планран иртерсе марганец тăпри, шифер, нефть, цемент, пир-авăр, çусем тата ытти продукци нумай панă. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан ялхуçалăх культурисем пухса илесси ÿсет. Бакрадзе юлташ Грузи ССР-не хуçалăхла хăшпĕр задачăсене татса парас ĕçре пулăшу парас тĕлĕшпе союзлă министерствăсем умне практикăлла чылай ыйтусем кăларса тăратать.

Юлашкинчен Бакрадзе депутат Грузи халăхĕ аслă вырăс халăхĕпе авалтан туслă пурăнни çинчен калать. Совет халăхĕсен пĕрлĕхне нимĕнле вăй та хавшатма пултараймасть, тет вăл.

Пренире тухса каланă депутатсем Правительство тăратнă ССР Союзĕн Государство бюджетне пурте пĕр шухăшлă пулса ырланă. Вĕсем çĕнĕ ялхуçалăх налогĕ партипе правительство колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетес енĕпе пурнăçласа пыракан пысăк ĕç пулса тăни çинчен, вăл колхоз хресченĕсен пурнăçне малалла лайăхлатма пулăшни çинчен каланă. Совет Союзĕнчи халăхсем суйласа янă депутатсем партин XIX-мĕш съезчĕ СССР халăх хуçалăхне аталантармалли пилĕк çуллăх план çинчен йышăннă решенисене пурнăçа кĕртессишĕн совет çыннисем хăйсен пĕтĕм вăйне хурса ĕçлеме хатĕр тăни çинчен каласа панă.

Союз Совечĕн çитес ларăвĕ августăн 7-мĕшĕнче ирхине 11 сехетре уçăлать.

(ТАСС).

СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ ячĕпе

Республикăри ĕççыннисем СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ уçăлнă куна ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илессишĕн ырми-канми ĕçлерĕç. Промышленность предприятийĕсем, çичĕ уйăхри производство планне иртерсе тултарса, планран иртерсе продукци туса кăларассишĕн, чĕртаварсемпе материалсем перекетлессишĕн кĕрешрĕç. Колхозлă ялсен ĕçченĕсем ăнса пулнă вăйлă тырпула кĕске вăхăтра тата пĕр тăкаманасăр пухса кĕртес ĕçе, государство умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе — тырă памалли обязательствăна срокчен пурнăçлассишĕн пыракан ăмăртăва куллен вăйлатса пычĕç. Сесси уçăлнă кун тĕлне хăшпĕр колхозсем государствăна тырă памалли плана срокчен тултарчĕç.

Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн строительствинче ĕçлекенсем СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн документĕсене хавасланса вуласа пыраççĕ. Арматурщиксен А. Смирнов юлташ ертсе пыракан бригадăçа сесси материалĕсем пичетленнĕ хаçатсем çитсенех бригадир каласу иртерчĕ.

— СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ пăхса тухакан ыйтусем социализмла державăн хуçалăхпа культура строительстви хăватлăн çĕкленсе пынине кăтартса параççĕ, — тет А. Смирнов юлташ. — Çĕршывăн экономики хăватлăн ÿссе пыни ял çыннисенчен илекен ялхуçалăх налогне кăçалах 43 процент чакарма май парать. Çакă вăл ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе çĕнĕрен пысăк утăм тунине пĕлтерет.

Бригадăри арматурщиксем сесси ячĕпе август уйăхĕнчи производство планне срокчен 5 кун малтан тултарма сăмах панă.

Строительствăри ытти бригадăсенче те сесси материалĕсемпе хавасланса паллашаççĕ. Платниксен Д. Платонов, каменщиксен М. Степанов, штукатурсен В. Прокопьева юлташсем ертсе пыракан бригадăсенче сесси материалĕсене ĕнер пĕрле пухăнса вуланă.

Национальноçсен Советĕнче

ССР Союзĕн 1953 çулхи Государство бюджечĕ çинчен тата ССР Союзĕн 1951 çулхипе 1952 çулхи Государство бюджечĕсене пурнăçлани çинчен

Национальноçсен Совечĕн бюджет комиссийĕн председателĕ И. С. ХОХЛОВ депутат тунă содоклад

Депутат юлташсем!

Национальноçсен Совечĕн бюджет комиссийĕ ССР Союзĕн 1953 çулхи Государство бюджетне тата ССР Союзĕн 1951 çулхипе 1952 çулхи Государство бюджечĕсем мĕнле пурнăçланни çинчен çырнă отчета, Правительство Верховнăй Советра çирĕплетме тăратнăскерсене, пăхса тухрĕ тата тупăшсемпе расходсем мĕн чухлĕ пуласси не кăтартса паракан материалсене тĕпчесе вĕренчĕ.

Çак çулсенче СССР Государство бюджетне халăх хуçалăхĕ малалла çĕкленсе, промышленноçпа ялхуçалăх производстви ÿссе пынă условисенче пурнăçланă. Çав çитĕнÿсене пирĕн халăх Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви ертсе пынипе тума пултарчĕ.

Государство предприятийĕсемпе хуçалăх организацийĕсем нумайăшĕ оборотран налог памалли тата усламран укçа уйăрса памалли плансене иртерсе тултарчĕç, планран иртерсе бюджета укçа чылай пачĕç. Сăмахран, тĕслĕ металлургин, СССР Çул-йĕр министерствин предприятийĕсем тата ыттисем те усламран укçа уйăрса парас енĕпе плана иртерсе тултарчĕç.

Çакă вара бюджета лайăх пурнăçлама май пачĕ. СССР Государство бюджетне тупăшсем енĕпе 1951 çулта 102,5 процент пурнăçланă, тупăшсем расходсенчен 27,3 миллиард тенкĕ ытларах пулнă; 1952 çулта бюджета тупăшсем енĕпе 101 процент пурнăçланă, тупăшсем расходсенчен 37,5 миллиард тенкĕ ытларах пулнă. Çав укçа-тенке халăх хуçалăхĕ валли парса тăнă.

Тупăшсем енĕпе бюджета ăнăçлă пурнăçланă май, халăх хуçалăхне аталантармалли çулталăклăх плансемпе килĕшÿллĕн, мĕнпур ĕçсене тума укçа-тенкĕ çителĕклĕ парса тăнă.

Кунпа пĕрлех, бюджет комиссийĕ çакна палăртать: хăшпĕр министерствăсен предприятийĕсем бюджета укçа парас енĕпе хăйсен обязательствисене çителĕксĕр пурнăçларĕç. Сăмахран, çĕр кăмрăк промышленноçĕн предприятийĕсем 1952 çулта бюджета усламран 180 миллион тенкĕ парса çитерейменрĕç, вĕсем кăçал та бюджета укçа памалли плана начар пурнăçласа пыраççĕ. Кăçал çăмăл промышленноçăн, апат-çимĕç промышленноçĕн, машиностроени промышленноçĕн тата ытти хăшпĕр отраслĕсен предприятийĕсем хăйсен обязательствисене çителĕксĕр пурнăçлаççĕ.

Министерствăсен руководителĕсен хăйсене пăхăнса тăракан предприятисем 1953 çулта тупăшсем енĕпе çирĕплетсе панă плана вăхăтра пурнăçлачăр тесе тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать.

Союзлă республикăсен бюджечĕсене тупăшсем енĕпе 1951 çулта 104,7 процент, 1952 çулта—101,2 процент пурнăçланă.

Союзлă республикăсем, пĕтĕмĕшпе илсен, бюджетсене пурнăçларĕç пулсан, Казах ССР тата Киргиз ССР Министрĕсен Совечĕсем бюджета пурнăçлас тĕлĕшпе 1952 çулта çителĕксĕр ĕçлени палăрчĕ. Çавна пула Казах ССР-ĕн бюджечĕ тупăшсем енĕпе 97,3 процент, расходсем енĕпе—94,5 процент пурнăçланнă. Киргиз ССР бюджетне тупăшсем тата расходсем енĕпе пĕтĕмпе 98,3 процент тултарнă. Халăх хуçалăхне тата социально-культурăлла учрежденисене укçа-тенкĕ парса тăрас ĕçре те çав республикăсенче пысăк çитменлĕхсем пулнă. Казах ССР тата Киргиз ССР Министрĕсен Совечĕсен бюджета пурнăçлас ĕçе ертсе пырассине лайăхлатас пулать.

1951-мĕшпе 1952-мĕш çулсенче бюджет дисциплинине чылай çирĕпленнĕ. Финанс министерстви тата унăн вырăнти органĕсем бюджетри укçапа пурăнакан учрежденисем укçа-тенке мĕнле расходланине тĕрĕслесе тăрас ĕçе вăйлатнă. Анчах хăшпĕр çĕрте финанс органĕсем бюджет дисциплинине пăсни те пулнă. Сăмахран, Узбек ССР Финанс министерстви 1951 çулта государствăн республикăри издательствине бюджет тăрăх пама палăртнă хисепрен иртерсе 3.641 пин тенкĕ панă. Молдаван ССР Финанс министерстви Бельцăри тир тăвакан фабрикăна бюджет тăрăх палăртнинчен иртерсе 3.178 пин тенкĕ панă.

СССР Финанс министерствин хăйĕн кадрĕсене бюджет дисциплинине çирĕп тытса пыма воспитани парас ĕçе вăйлатас пулать, финанс органĕсен руководителĕсене укçа парас ĕçри дисциплинăна пăсма чармалла.

Бюджет комиссийĕ ССР Союзĕн 1951 çулхипе 1952 çулхи Государство бюджечĕсем мĕнле пурнăçланни çинчен çырнă, СССР Министрĕсен Совечĕ йышăннă отчетсене çирĕплетме сĕнет.

Депутат юлташсем! ССР Союзĕн 1953 çулхи Государство бюджетне, ăна Правительство СССР Верховнăй Советĕнче çирĕплетме тăратнă, халăх хуçалăхĕн 1953 çулхи планĕпе пĕтĕмпех килĕшÿллĕн туса хатĕрленĕ.

Бюджетра кăçалхи апрелĕн 1-мĕшĕнче государствăн апат-çимĕçпе промышленность таварĕсене ваккăн сутмалли хакĕсене çĕнĕрен нумай йÿнетни палăрнă. Пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, государствăн таварсене ваккăн сутмалли хаксене йÿнетнинчен кăна халăх çулталăкра 46 миллиард тенкĕ таран усă курать.

Бюджетра çавăн пекех Партипе Правительство халăх хуçалăхне, культурине малалла аталантарас тата социализмла обществăн ĕçченĕсен пурнăçне чылай лайăхлатас тĕлĕшпе йышăннă мерăсем те палăрнă.

СССР Министрĕсен Совечĕ ССР Союзĕн 1953 çулхи Государство бюджетĕнче тупăшсем 543,3 миллиард тенкĕ, расходсем—530,5 миллиард тенкĕ пулмалла, тупăшсем расходсенчен 12,8 миллиард тенкĕ ытларах пулмалла тума палăртнă.

Социализмла хуçалăхран кĕрекен тупăшсем пирĕн бюджетăн никĕсĕ пулса тăраççĕ. Кăçал социализмла хуçалăхран кĕрекен укçа Государство бюджечĕн пĕтĕм тупăшĕсен пиллĕкмĕш пайĕнчен тăватă пайĕ чухлĕ ытла пулмалла. Çав укçатенкĕ шутĕнче государство предприятийĕсемпе хуçалăх организацийĕсен усламĕнчен илекен укçа пысăк вырăн йышăнса тăрать.

1953 çулхи бюджетра халăхран налогсем, заем укçи тата ытти укçа-тенкĕ пухнипе кĕрекен тупăшсем, иртнĕ çулта мĕн чухлĕ пухăннипе танлаштарсан, 15,3 миллиард тенкĕ сахалтарах пулаççĕ, вĕсем тупăшсен 14,1 проценчĕ пулаççĕ, 1952 çулта вара вĕсем тупăшсен 18,5 проценчĕ пулнă.

Правительство ялхуçалăх налогĕн хисепне чылай чакарма йышăннă, çакă вара бюджетăн кун йышши тупăшне чылай чакарать. Çапла туни Партипе Правительство ялти халăхăн пурнăçне малалла лайăхлатса пыма тăрăшнине уççăн палăртса тăрать.

СССР Государство бюджетне тупăшсем пухăнасси кашни предприяти государство планне ăнăçлă тултарса пынинчен килет. Çавăнпа та предприятисемпе хуçалăх организацийĕсен руководителĕсен пурин те, финанс работникĕсен пурин те халăх хуçалăх планне тата Государство бюджетне пурнăçлассишĕн активлă кĕрешмелле.

ССР Союзĕн 1953 çулхи Государство бюджетĕнче халăх хуçалăхĕ валли 192,5 миллиард тенкĕ, социально-культурăлла ĕçсем валли 129,8 миллиард тенкĕ пама палăртнă.

Халăх хуçалăхĕпе культурине аталантарма тухакан расходсем бюджетăн пĕтĕм расхочĕсен виççĕмĕш пайĕнчен икĕ пайĕ яхăн пулаççĕ. Государство бюджетĕнчи укça-тенке çавăн пек расходлани халăх хуçалăхĕпе культурин мĕнпур отраслĕсене малалла хăватлăн вăйлатса пыма, халăх пурнăçне лайăхлатма май парать, Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви мире сыхласа хăварас тата тĕреклетес политика тытса пынине ĕçре кăтартса парать.

Совет халăхĕ Парти коммунизмла общество тăвас тĕлĕшпе лартнă задачăсене пурнăçлама пĕтĕм вăя хурса тăрăшать. Совет халăхĕ пирĕн Партипе Правительство яланах çирĕппĕн пурнăçласа пыракан мирлĕ политикăна пĕтĕмпех ырлать. Çавăнпа пĕрлех совет халăхĕн ирĕксĕрех тĕнчери реакци киревсĕр ĕçсем тума шутланине те асра тытма тивет. Тĕнчери реакци çĕнĕ вăрçă планĕсене хатĕрлет, хăйĕн агентурин Совет Союзне хирĕçле сăтăрла ĕçĕсене вăйлатать. Çакă хамăрăн Советлă Тăван çĕршыва кирлĕ пек хÿтĕлеме хушать. Çавăнпа та бюджет комиссийĕ Правительство пирĕн социализмла государствăна хÿтĕлес ĕç валли укçатенкĕ парас тĕлĕшпе тăратнă сĕнĕве тĕрĕс тесе шутлать.

Союзлă республикăсен 1953 çулхи бюджечĕсене 102,6 миллиард тенкĕ пулмалла тума палăртнă, çак хисеп пĕлтĕрхи хисепрен 4,8 миллиард тенкĕ ытларах. Республикăсен халăх хуçалăхне тата социально-культурăлла ĕçĕсене аталантарма вĕсен бюджечĕсенчи мĕнпур укçан вунă пайĕнчен тăхăр пайĕ каять.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче союзлă республикăсен бюджечĕсем енĕпе халăх хуçалăхне 142 миллиард тенкĕ ытла хывнă, халăха вĕрентес, сывлăха сыхлас ĕçсене, ытти социально-культурăлла ĕçсене кайнă расходсем 405 миллиард тенкĕ ытла пулнă. 1953 çулта союзлă республикăсен бюджечĕсем енĕпе халăх хуçалăхĕ валли 22 миллиард тенке яхăн, социально-культурăлла ĕçсем валли 70 миллиард тенкĕ ытла пама палăртнă. Республикăсен хуçалăхпа культура строительствине вĕсен бюджечĕсенчен тата Совет Союзĕн бюджетĕнчен кашни çулах укçа-тенкĕ нумай хывнипе совет республикисен сăнсăпатне урăхлатса çĕнетнĕ, вĕсенче экономикăпа культура чечекленет. ССР Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ тата ытларах тĕреклен чĕ, çав туслăх чăннипех те пирĕн социализмла Тăван çĕршыва аталантаракан хăватлă вăй пулса тăрать.

Çаксене пурне те ленинла-сталинла наци политикине пурнăçласа пынипе тата Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен материальнăй пурнăçри тата культура тĕлĕшĕнчи тăтăшах ÿссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтерме яланах хытă тăрăшнипе тума пултарнă.

Бюджет комиссийĕ ССР Союзĕн Правительстви тăратнă 1953 çулхи Государство бюджетне, Бюджет комиссийĕн çакăн пек тÿрлетĕвĕсене кĕртсе, çирĕплетме сĕнет.

Бюджетри тупăшсене 907,4 миллион тенкĕ чухлĕ ÿстермелле, çав шутран: оборотран илекен налог енĕпе—617,4 миллион тенкĕ, государство банкĕн усламĕ енĕпе кĕмелли укçан хисепне—100 миллион тенкĕ, государство пошлини тăрăх, кооперации организацийĕсен патенчĕ тăрăх пухăнакан тупăшсем, вăрман тупăшĕсем енĕпе тата тĕрлĕ налогсем илнипе укçа пухас енĕпе—155 миллион тенкĕ, учрежденисемпе организацисем бюджетран кивçен илнĕ, пĕлтĕр усă курман укçана таварсă панипе пухăнмалли тупăшсем енĕпе—35 миллион тенкĕ ÿстермелле.

Оборотран кĕмелли налог тĕлĕшпе СССР Çăмăл тата апат-çимĕç промышленность министерстви енĕпе пухăнмалли тупăшсене 570 миллион тенкĕ ÿстерме сĕнетĕп, çав тупăшсем производствăна пысăклатнă тата продукци пахалăхне лайăхлатнă май пухăнмалла; СССР Электростанцийĕсемпе электропромышленность министерстви енĕпе çав тупăшсене 1,4 миллион тенкĕ тата потребкооперации енĕпе—46 миллион тенкĕ ÿстермелле. Потребкооперации енĕпе çав тупăшсем халăха куллен кирлĕ таварсем нумайрах сутнипе пухăнмалла.

Ытти тÿрлетÿсене халиччен шутласа тухнисене тĕрĕсленĕ хыççăн, çитменлĕхсене тÿрлетес шутпа сĕнетпĕр.

Бюджет комиссийĕ тĕрĕсленĕ чухне тупăшсем ытларах пухăнмалли, 907,4 миллион тенкĕ пулмалли палăрнă. Çав укçана ССР Союзĕн 1953 çулхи Государство бюджетĕнче тупăшсене расходсенчен нумайрах пулмалла тума, çав укçана тупăшсене расходсенчен иртерме пама сĕнетпĕр.

Бюджет комиссийĕ союзлă хăшпĕр республикăсен правительствисенчен уйрăм ĕçсене пурнăçлама укçа хушса пама ыйтнă çырусем илчĕ. Çав çырусене пăхса тухнă хыççăн, Бюджет комиссийĕ союзлă республикăсен бюджечĕсем енĕпе расходсене 35,3 миллион тенкĕ чухлĕ ÿстерни вырăнлă тесе шутлать, çав шутран: Украина ССР бюджечĕ енĕпе, малтан шутласа хунисене тĕрĕслесе тÿрлетнĕ май,—20 миллион тенкĕ, Узбек ССР бюджечĕ енĕпе сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсене тытса тăма тата вырăнти Советсен пурăнмалли çурт-йĕрĕсене юсама—13.3 миллион тенкĕ, Таджик ССР бюджечĕ енĕпе вырăнти Советсен пурăнмалли çурт-йĕрĕсене юсама—2 миллион тенкĕ ÿстерсе пама пулать. Çав укçана республикăсене Государствăн кăçалхи бюджетне пурнăçланă май парса тăмалла.

Кунсăр пуçне, Бюджет комиссийĕ СССР Верховнăй Советне çакăн çинчен пĕлтерме кирлĕ тесе шутлать. ССР Союзĕн 1953 çулхи Государство бюджетне пăхса тухас тĕлĕшпе ĕçленĕ вăхăтра Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕн бюджет комиссийĕсем тупăшсене пĕтĕмпе 3.035 миллион тенкĕ чухлĕ ÿстерме сĕннине йышăннă, çавна ССР Союзĕн 1953 çулхи Государство бюджечĕн çак сессире пăхса тухма тăратнă проектĕнче шута илнĕ.

Депутат юлташсем! СССР Государство бюджетне тупăшсем енĕпе пурнăçласси Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те перекетлĕх режимне çирĕп тытса пымалли çинчен панă кăтартусене тимлĕн тата туллин пурнăçласа пынинчен килет.

Партин XIX-мĕш съездĕнче Г. М. Маленков юлташ çапла каланă: «Производство ресурсĕсемпе мĕн чухлĕ туллинрех тата вырăнлăрах усă курăпăр, хамăр хуçалăха эпир мĕн чухлĕ перекетлĕрех те тирпейлĕрех тытса пырăпăр, халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене аталантарас ĕçре çавăн чухлĕ ытларах çитĕнÿсем тăвăпăр, халăх пурнăçĕн материальнăй тата культурăлла шайне хăпартас ĕçре çавăн чухлĕ ытларах çитĕнÿсем тăвăпăр».

Ку тĕлĕшпе пирĕн пысăк майсем пуррине çак тĕслĕх кăтартса парать: промышленность продукцийĕн хăйне ларакан хакне йÿнетнипе кăна 1951 çулта 35,5 миллиард тенкĕ, 1952 çулта 46 миллиард тенкĕ ытла укçа перекетленĕ.

Халăх хуçалăхĕн пĕтĕм планне ăнăçлă тултарса пынă вăхăтрах, çителĕксĕр ĕçлекен, производство планĕсене, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелли заданисене тата бюджет умĕнчи обязательствăсене тултарса пыман предприятисем те пур-ха. Транспорт машиностроенин предприятийĕсем 1952 çулта производство планне 96 процент çеç тултарнă. Плана тултарайманнин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри вăл чылай заводсем технологипе производство дисциплинине хавшатни пулать, çакă вара продукци пахалăхĕнче палăрнă.

Производство планне тултарман пирки тата усăсăр тăкаксем пысăк пулнă пирки транспорт машиностроени завочĕсем туса кăларакан продукцин хăйне ларакан хакĕсем планпа палăртнинчен чылай хаклăрах пулнă. Продукцин хăйне ларакан хакĕ пуринчен ытларах Мăравус завочĕсенче, юханшыв çинче çÿрекен пăрахутсем тăвакан заводсенче, Челябинскри заводра нумай ÿснĕ. Асăннă заводсем япăх ĕçлени промышленноçăн çав отраслĕн кăтартăвĕсене начарлатрĕ, çав вăхăтрах ку промышленноçра лайăх ĕçлекен предприятисем те сахал мар. Сăмахран, Харьковри транспорт машиностроени завочĕ 1952 çулта продукци туса кăлармалли плана 107 процент тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетнипе планран иртерсе 4.290 пин тенкĕ перекетленĕ. Киеври «Ленинская кузница» завод производство планне 112,3 процент тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетнипе планран иртерсе 1.800 пин тенкĕ перекетленĕ.

Партипе правительство çĕр кăмрăк промышленноçне чи лайăх техникăпа пуянлатма нумай пулăшаççĕ. Пирĕн çĕр кăмрăк промышленноçĕ техника пуянлăхĕ енчен тĕнчере пĕрремĕш вырăнта тăрать. Анчах хальхи вăхăтра механизаци хатĕрĕсемпе пур çĕрте те тĕрĕс усă курмаççĕ-ха. «Красноармейскуголь» тресчĕн 42-мĕш шахтинче 1953 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне унти комбайнсен, çĕр чавалмалли машинăсен 38 проценчĕ çеç ĕçре пулнă. Пĕлтĕр «Молотовуголь» комбиначĕн шахтисенче механизмсемпе çителĕксĕр усă курнă. Унта кăçал та ĕç лайăхланман. 1953 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне ку комбинатри комбайнсен 10 проценчĕ çĕр чаваламалли машинăсен 64 проценчĕ, кăмрăк тиемелли машинăсен 26 проценчĕ, тăпра тиемелли машинăсен 60 проценчĕ çеç ĕçре пулнă. Çавна пула «Молотовуголь» комбиначĕ çĕр кăмрăкĕ кăлармалли плана тултарса пыраймасть.

Пирĕн социализмла ялхуçалăхĕ кашни çулах тракторсем тата ытти ялхуçалăх машинисем нумай илет. Иртнĕ çулта ялхуçалăх 131 пин трактор (15 лаша вăйлĕ тракторсем çине куçарса шутласан), тĕштырăсене вырса пухмалли 41 пин комбайн, ытти машинăсемпе ĕç хатĕрсем 2 миллион ытла илнĕ.

Машина-трактор станцийĕсенчен нумайăшĕ техникăпа туллин усă кураççĕ. Çав вăхăтрах хăшпĕр машина-трактор станцийĕсем машинăсемпе тата ытти ĕç хатĕрĕсемпе çителĕксĕр усă кураççĕ. Тамбов облаçĕнчи Кирсановăри машина-трактор станцийĕн тракторĕсем 1952 çулта ĕç вăхăчĕн суррине яхăн нимĕн ĕçлемесĕр тăнă; Полесье облаçĕнчи Василевичри машина-трактор станцийĕн тракторĕсем ĕç вăхăчĕн 45 процентне яхăн нимĕн усăсăр пĕтернĕ. Машинăсем нумай вăхăт хушши ĕçлемесĕр тăни вĕсене начар юсанинчен тата вĕсене пăхса усрамалли йĕркесене пăснинчен килнĕ. Ытти районсенче те машина-трактор станцийĕсен ĕçĕсенче пысăк çитменлĕхсем пулнă. Çавна пула ССР Союзĕн Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин машина-трактор станцийĕсенче иртнĕ çулта тракторпа тунă ĕçсен хăйне ларнă хакĕ планпа палăртнинчен пысăкрах пулнă. Юлашки çулсенче МТС-сен хуçалăхĕ ÿснĕ, пысăкланнă, анчах ĕçсен хăйне ларакан хакне йÿнетессишĕн, пурлăхпа укçа-тенке перекетлессишĕн кирлĕ пек кĕрешмеççĕ-ха.

Хальхи йĕрке тăрăх МТС-сен пур расхочĕсене Государство бюджетĕнчен тÿлеççĕ. МТС-сем тунă ĕçшĕн укçа Государство бюджетне пухăнать. Расходсем валли бюджетран яланах вăхăтра укçа илсе тăрса, МТС-сен тата СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин органĕсен руководителĕсем МТС тунă ĕçшĕн тÿлекен укçа бюджета пырса кĕнипе сахал интереслеççĕ, çакна пула МТС-сенчен тупăш илмелли план çултан-çул пурнăça кĕрсе çитмест. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин МТС-сен финанс хуçалăхĕнче тивĕçлĕ йĕркелĕх тума тăрăшас пулать.

Строительство организацийĕсем нумайăшĕ 1952 çулта строительствăри ĕçсен хăйне ларакан хакне йÿнетес тĕлĕшпе вĕсене панă заданисене пурнăçлайман. Çапла, СССР Строительство министерствин тата СССР Çĕр кăмрăк промышленноçĕн министерствин строительство организацийĕсем ĕçсен хăйне ларакан хакне йÿнетмен, ĕçсем сметăра пăхнинчен те хакла ларнă.

Строительствăри ĕçсем хакла ларнин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри вăл механизмсемпе çителĕксĕр усă курни пулать. Сăмахран, «Ростовшахтстрой» трестĕнче пĕлтĕр скреперсемпе бульдозерсем ĕç вăхăчĕн суррине ытла ĕçлемесĕр тăнă. «Сталиншахтстрой» комбинатĕнче пĕр хуранлă экскаваторсем ĕç вăхăчĕн 60 процентĕнче çеç ĕçре пулнă.

Строительствăри пысăк çитменлĕх вăл çĕнĕ предприятисене ĕçе кĕртмелли плансене пурнăçламанни пулать. СССР Çăмăл тата апат-çимĕç промышленность министерстви çăкăр пĕçерекен, ÿсентăран вăрринчен çу кăларакан, трикотаж кĕпе-тумтирĕ, ăтă-пушмак туса кăларакан çĕнĕ предприятисене тата холодильниксене ĕçе кĕртмелли плана пĕлтĕр тултарайман. Çавна пула вĕçлесе çитермен строительствăсем чылай нумайланчĕç.

Çĕнĕ предприятисене туса пĕтерсе ĕçе кĕртменни 1952 çулхи производство планне тултарма чăрмантарчĕ тата 1953 çулăн пĕррремĕш çур çулĕнче ĕççыннисем валли таварсем туса кăларассине ÿстерме чарса тăчĕ.

(Юлашки 3-мĕш страницăра).

СССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔСЕМ

Национальноçсен Совечĕн Бюджет комиссийĕн председателĕ И. С. Хохлов депутат тунă содоклад

(Юлашки. Пуçламăшĕ 2-мĕш страницăра).

Савнашкалах предприятисенче пурăнмалли çĕнĕ суртсене, больницăсене тата ача яслисене туса пĕтересси вăрăха тăсăлать. 1952 çулта СССР Çĕр кăмрăк промышленность министерствин предприятийĕсенче пурăнмалли çурт-йĕрсене ĕçе кĕртмелли плана 88 процент тата больницăсене ĕçе кĕртмелли плана 37 процент çеç пурнăçланă. СССР Нефть промышленность министерствин предприятийĕсенче ача яслисене ĕçе кĕртмелли плана 58 процент тата больницăсене ĕçе кĕртмелли плана 26 процент тултарнă, СССР Металлурги промышленность министерствин предприятийĕсенче çав ĕçсен планне 52 процент тата 41 процент çеç тултарнă. Предприятисемпе министерствăсен руководителĕсен çурт-йĕрсем, больницăсем тата ача учрежденийĕсем тăвас ĕç çине ытларах пăхни кирлĕ.

Нумай чухне строительство ĕçĕсем проектпа сметăна вăхăтра туса çитермен пирки чарăнса тăраççĕ. 1953 çулхи планпа пăхнă чылай стройкăсен техникăлла документаци çук. Типовой проектсем тăвас ĕç юлса пырать. 1952 çулта типовой проектсем тумалли плана 77,6 процент çеç тултарнă. Министерствăсен проект хатĕрлекен организацийĕсем тунă проектсемпе сметăсенче çаплах ытлашши ĕçсене кÿртсе тултараççĕ-ха. Министерствăсен проект хатĕрлекен хăйсен организацийĕсен ĕçне татăклăнах лайăхлатмалла.

Вăрăм срокпăха укçа паракан банксем енчен строительство ĕçне укçа-тенкĕ тĕлĕшпе контроль туса пырасси партипе правительство лартнă задачăсене тивĕçтерейместь. Строительство организацийĕсем укçа-тенкĕпе мĕнле усă курнине банксем çителĕклĕ тĕрĕслесе пымаççĕ тата капитальнăй строительствăра шалти ресурссене мобилизацилес ĕç мĕнле тăнине начар тĕрĕслесе пыраççĕ. Промбанкăн Львоври тата Могилеври кантурĕсем, сăмахран, çăннипе туман ĕçсемшĕн укçа тÿлени те пулнă.

СССР Финанс министерствин капиталовложени енĕпе укçа-тенкĕ парса тăракан банксем умне пысăкрах требованисем лартмалла, вĕсем строительство ĕçĕсен планĕсене пурнăçланине тата перекетлĕх режимне тытса пынине тĕрĕслесе тăрассине вăйлатмалла.

Государство бюджетне ăнăçлă пурнăçа кĕртме япаласемпе укçа-тенкĕне вырăнсăр тăкакланине тата ведомствăсем харпăр хăй интересĕсемшĕн çеç тăрăшнине пăхнине хирĕç кĕрешессине вăйлатни кирлĕ. Пирĕн хуçалăх организацийĕсен руководителĕсем хушшинче çакăн пек çынсем пур: вĕсем харпăр хăй ведомствисен интересĕсемшĕн тăрмашса, государство интересĕсене сиен кÿрсе, плансенче пысăк резервсем тăваççĕ. Сăмахран, СССР Строительство материалĕсен промышленность министерствин Карадагскри цемент заводĕнче 1952 çулта продукцин хăйне ларакан хакне плана 7,6 миллион тенкĕлĕх пысăклатса кăтартнă. Министерствăн главки çак заводăн техпромфинпланне май уйăхĕнче илнĕ те, 1952 çулти ноябрь уйăхĕччен те пăхса тухса çирĕплетмен, çапла вара çулталăка яхăн завода продукцин хăйне ларакан хакне ÿстерсе тунă планпа ĕçлеме май туса панă. Материалсем, топливо, электроэнерги расходламалли плансене Краматорскри, Белгородри тата Сталинабадри цемент заводĕсенче те ÿстерсе кăтартнă. Пурĕ 6 цемент заводĕнче продукцин хăйне ларакан хакне плана 15 миллион тенкĕлĕх е 8,3 процент ытлашши ÿстернĕ.

Заводсен сметисенче пысăк резервсем пурри нумай предприятисене вĕсем бюджет умĕнчи хăйсен обязательствисене пурнăçласан, хуçасăрлăхла сухатусене тата тухăçсăр расходсене те витсе хăварма май панă. Сăмахран, ялхуçалăх машиностроенин предприятийĕсенче 1951 çулта çакнашкал резервсен шучĕпе брак пирки пулнă сухатусене 191,9 миллион тенкĕлĕх тата тухăçсăр расходсене 50,6 миллион тенкĕлĕх витсе хăварнă. Çав вăхăтрах отчетра планпа пăхнă хăйне ларакан хакран ытла 59,5 миллион тенкĕ перекет тунă тесе кăтартнă.

Кунашкал киревсĕр ĕç государствăна пысăк сиен кÿрет, çавăнпа та ку киревсĕрлĕхе тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтермелле. Çакăнпа пĕрлех ку тивĕçлĕ министерствăсен планпа экономика ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине кăтартса парать. СССР Финанс министерстви ытти министерствăсен финанспа хуçалăх ĕçне çителĕксĕр тĕрĕслет тата халăх хуçалăхĕн отраслĕсен экономикине сахал тĕпчесе вĕренет.

Депутат юлташсем! Пирĕн Совет халăхĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсене пысăк хавхаланупа пурнăçа кĕртсе пырать. Пирĕн аслă Тăван çĕршывăн халăхĕсем, хăйсен речĕсене Коммунистсен партийĕ, унăн Центральнăй Комитечĕ тата Совет Правительстви тавра татах та тачăрах пĕтĕçтерсе, халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсене те çĕнĕрен çĕклессишĕн, ĕççыннисен пурнăçне малалла лайăхлатассишĕн çине тăрса кĕрешеççĕ.

Пирĕн Партипе Правительство совет халăхĕн ялан ÿссе пыракан ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерессишĕн тăрăшассине малашне те чи кирлĕ задачăсенчен пĕри тесе шутлаççĕ.

Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхăн виççĕмĕш çулĕнчи çав тери пысăк задачăсене татса парас ĕçре СССР Верховнăй Совечĕ пăхса тухакан Государство бюджечĕн пĕлтерĕшĕ пысăк. Министерствăсен, ведомствăсен, финанс органĕсен бюджетăн тупăшсен планне тултармалла тăвас тесе татăклă мерăсем йышăнмалла. Савăнпа пĕрлех бюджетпа пăхса хунă ĕçсене тума укçатенкĕне вăхăтра уйăрса памалла тата государствăн укçи-тенкипе усă курас ĕçре перекетлĕх режимне çирĕп тытса пымалла.

СССР Государство бюджетне ăнăçлă пурнăçлани пирĕн çĕршывра коммунизм тăвас ĕçре çĕнĕ çĕнтерÿсем тума май парать. Коммунизм патне пире тăван Коммунистсен партийĕ шанчăклăн ертсе пырать (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Союз Советĕнче

ССР Союзĕн 1953 çулхи Государство бюджечĕ çинчен тата ССР Союзĕн 1951 çулхипе 1952 çулхи Государство бюджечĕсене пурнăçлани çинчен

Союз Совечĕн Бюджет комиссийĕн председателĕ Л. Р. КОРНИЕЦ депутат тунă содоклад

Депутат юлташсем!

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем совет халăхне пирĕн çĕршывăн экономикипе культурине çĕнĕрен пысăк хăватпа çĕклентермелли чаплă программăпа, коммунизм патне малалла пымалли программăпа хĕçпăшаллантарчĕç.

Съезд решенийĕсене пурнăçласа, Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительстви пирĕн Тăван çĕршывăн экономикипе оборона хăватне тĕреклетес, Совет Союзĕн тĕнчери ларутăрăвне тĕреклетес, рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин, мĕнпур совет çыннисен пурнăçне малалла лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç.

Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçсе, пирĕн çĕршыври ĕççыннисем хăйсен пĕтĕм вăйне ССР Союзне аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана тултарас тата ирттерсе тултарас ĕçе параççĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕ СССР халăх хуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе кăларса тăратнă задачăсем Совет Союзĕн государство бюджетĕнче яруççăн палăрса тăраççĕ. ССР Союзĕн 1953 çулхи Государство бюджетне халăх хуçалăх планĕпе туллин килĕштерсе тунă, вăл хуçалăха, культурăна малалла ÿстерме, халăх пурнăçне лайăхлатма, пирĕн социализмла Тăван çĕршывăн хăватне тĕреклетме пулăшать.

Бюджет тăрăх халăх хуçалăхне 192,5 миллиард тенкĕ, 1952 çулхинчен 13,7 миллиард тенкĕ ытларах, пама палăртнă. Çакă вăл социализмла экономикăн мĕнпур отраслĕсене малалла вăйлатма, халăх хуçалăхне техникăпа пуянлатма, промышленность тата ялхуçалăх продукцийĕсем кăларассине ÿстерме пулăшать.

Халăха вĕрентес, сывлăха сыхлас тата социальнăй обеспечени ĕçĕсем валли, çавăн пекех ытти социальнăй тата культурăлла ĕçсем валли 129,8 миллиард тенкĕ пама палăртнă. Çакă вăл 1952 çулхипе танлаштарсан 7 миллиард тенкĕ ытларах пулать.

Халăха вĕрентес, культура, сывлăха сыхлас ĕçсем валли укçа-тенкĕ парассине чылай ÿстерни шкулсем, техникумсем, аслă шкулсем, библиотекăсем, культурăпа çутĕç учрежденийĕсем малалла уçса пыма, медицинăпа санитари учрежденийĕсене нумайлатма, халăха медицина пулăшăвĕ парассине чылай лайăхлатма май парать. Çурт-йĕр строительстви ĕçĕсем, хуласемпе рабочи поселоксен благоустройстви валли укçа-тенкĕ уйăрса парасси те ÿсет.

Халăх хуçалăхĕпе социальнăй тата культурăлла ĕçсем валли тухакан расходсем ÿснĕ вăхăтра, оборона ĕçĕсем валли паракан расход, 1952 çулхи сметăпа танлаштарсан, 3,6 миллиард тенкĕ чухлĕ чакать.

Çаксем пурте вĕсем Совет Союзĕн Государство бюджечĕ мирлĕ строительство бюджечĕ пулса тăни çинчен калаççĕ.

ССР Союзĕн 1953 çулхи Государство бюджечĕн тупăшсен тĕп çăлкуçĕ вăл, иртнĕ çулсенчи пекех, социализмла предприятисемпе организацисенчен килсе тăракан укçа-тенкĕ пулать. Çак тупăшсен удельнăй виçи иртнĕ çулхипе танлаштарсан ÿсет, халăхран килсе тăракан налогсен, тĕрлĕ тÿлевсен тата ирĕклĕн тÿлекен укçасен удельнăй виçи чылай чакать. Ку шутра халăх хушшинче саракан государство заемĕсем тăрăх бюджета кĕрекен укçа-тенкĕ икĕ хут ытла чакать. Ялхуçалăх налогĕ тăрăх та тÿлевсем палăрмаллах чакаççĕ.

Депутат юлташсем! Бюджет комиссийĕ ССР Союзĕн 1953 çулхи Государство бюджетне кăçалхи февраль уйăхĕнчех пăхса тухнă. Хальхи вăхăтра бюджет комиссийĕ ССР Союзĕн Государство бюджетне, куллен кирлĕ таварсен ваккăн сутмалли государственнăй хакĕсене йÿнетнине, государство заемĕн сумми чакнине, СССР министерствисене çĕнĕлле йĕркелесси çинчен кăларнă закона тата Правительство куллен кирлĕ массăллă таварсем туса кăларас тĕлĕшпе хушса заданисем панине шута илсе, тепĕр хут пăхса тухрĕ. Союз Совечĕн тата Национальноçсен Совечĕн бюджет комиссийĕсем тăратнă сĕнÿсем тăрăх, Верховнăй Совета пăхса тухма тăратнă государство бюджетĕнче тупăшсене 3.035 миллион тенкĕлĕх ÿстерме пăхнине шута илнĕ ĕнтĕ.

Кунсăр пуçне Союз Совечĕн бюджет комиссийĕ тупăшсене çĕнĕрен 907,4 миллион тенкĕлĕх ÿстерме сĕнÿ тăратать, вăл шутран:

— Оборотран илекен налог тăрăх 617,4 миллион тенкĕлĕх, вăл шутран: СССР Çăмăл тата апат-çимĕç промышленность министерстви енĕпе 570 миллион тенкĕ, потребитель кооперацийĕ енĕпе— 46 миллион тенкĕ тата СССР Электростанцисемпе электропромышленность министерстви енĕпе—1,4 миллион тенкĕ. Кăна куллен кирлĕ массăллă таварсем сутмалли плана ÿстерме май пуррине тата вĕсен ассортиментне лайăхлатнине шута илсе çавăн пек тунă;

— СССР Госбанкĕн тупăшĕсенчен илекен укçа енĕпе 100 миллион тенкĕ тата ытти тупăшсем енĕпе 190 миллион тенкĕ. Кăна расчетсене тĕрĕс шутласа кăларнипе çавăн пек тунă.

Бюджет комиссийĕ уйрăм ведомствăсемпе союзлă республикăсен министрĕсен совечĕсем укçа хушса пама ыйтнисене пăхса тухса, государство бюджечĕн расхочĕсене пурнăçланă май çакăн чухлĕ ÿстерме кирлĕ тесе шутлать: Украина ССР тăрăх 20 миллион тенкĕ (расчетсене тĕрĕс шутласа кăларнă тăрăх), Узбек ССР тăрăх—13,3 миллион тенкĕ, вăл шутран: вырăнти Советсен çурчĕсене тĕпрен юсама 10 миллион тенкĕ, сывлăх учрежденийĕсене тытса тăма 3,3 миллион тенкĕ, Таджик ССР тăрăх—2 миллион тенкĕ — вырăнти Советсен çурчĕсене тĕпрен юсама.

Бюджет комиссийĕ ССР Союзĕн 1953 çулхи Государство бюджетне çакăнта кăтартнă тÿрлетÿсене шута илсе çирĕплетме тата 907,4 миллион тенкĕ тупăша кĕртме сĕнет.

Депутат юлташсем! Совет халăхĕ Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе 1952 çулта тата 1953 çулăн иртнĕ çур çулталăкĕ хушшинче хуçалăхпа культура строительствин мĕнпур облаçĕсенче те çĕнĕрен пысăк çитĕнÿсем турĕ. 1953 çулăн малтанхи çурма çулĕнче промышленность енĕпе производство планне пĕтĕмĕшпе илсен 100 процент тултарнă. Кăçалхи ултă уйăх хушшинче мĕнпур промышленноçăн пĕтĕм продукцийĕ иртнĕ çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан 10 процент чухлĕ ÿснĕ.

Промышленноçпа ялхуçалăх производстви енĕпе тунă çитĕнÿсем, ĕç тухăçлăхне ÿстернĕ тата продукцин хăйне ларакан хакне чакарнă тăрăх, правительство 1953 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, карточка системине улăштарнă хыççăн, апатçимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли государственнăй хакĕсене çĕнĕрен, улттăмĕш хут йÿнетрĕ.

Правительство ялхуçалăх налогĕ çинчен йышăннă решенисем, çавăн пекех тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатас тата ялхуçалăхĕн ытти отраслĕсем енĕпе туса ирттерекен ĕçсем Партипе Правительство колхозсене тĕреклетессишĕн, колхоз хресченĕсен тата пĕтĕм совет халăхĕн пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшнине çĕнĕрен тепĕр хут кăтартса параççĕ.

1953 çулхи пĕрремĕш çур çулта халăх хуçалăхĕпе культури ÿссе пыни, 1951 çул планĕпе 1952 çул планне тултарнин итогĕсем пекех, çакна кăтартса параççĕ: партин XIX-мĕш съезчĕ ССР Союзне аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тăрăх панă директивăсенче кăларса тăратнă задачăсем ăнăçлăн пурнăça кĕрсе пыраççĕ.

1952 çулта ССР Союзĕн Государство бюджетне те ăнăçлăн тултарнă. Предприятисемпе хуçалăх организацийĕсен пысăк пайĕ бюджета тÿлемелли плансене тултарчĕç кăна мар тата ирттерсе тултарчĕç. Çав вăхăтрах кая юлакан предприятисем те пур-ха. Вĕсем тухăçлă ĕçлессишĕн, перекетлĕх режимне çирĕп тытассишĕн çителĕксĕр кĕрешеççĕ, пысăк сухатусем тăваççĕ, хăйсен бюджет умĕнчи обязательствисене пурнăçламаççĕ. Савăн пек, СССР Çĕр кăмрăк промышленность министерстви 1952 çулхи производство планне пĕтĕмĕшпе илсен тултарнă пулсан та чылай шахтăсем çĕр кăмрăкĕ кăлармалли плана тултарман. Çĕр кăмрăк промышленность предприятийĕсем иртнĕ çул продукцин хăйне ларакан хакне чакармалли задание те палăртса панă чухлĕ чакарман, хуçасăрлăха пула пысăк тăкаксем тунă. Çавна пула 1952 çулта бюджета тÿлемелли плана тултарман. 1953 çулăн малтанхи çур çулĕнче те пысăк çитменлĕхсене пĕтермен. Тонна çĕр кăмрăкĕн хăйне ларакан хакĕ планпа пăхнинчен 2,4 процент хаклăраха ларать. «Ворошиловградуголь», «Молотовуголь» тата «Сахалинуголь» 1953 çулăн малтанхи çур çулĕнче кăмрăк кăлармалли плана тултарман.

СССР Строительство материалĕсем тăвакан промышленность министервин Союза пăхăнса тăракан предприятийĕсем 1952 çулта брака пула 52,5 миллион тенкĕлĕх, вырăнсăр расходсене пула 45,9 миллион тенкĕлĕх сухату тунă.

СССР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕнче СССР Вăрман тата хут промышленность министерствин ĕçне хытă критиклерĕччĕ. Анчах та министерство критикăран тивĕçлĕ выводсем тумарĕ, 1952 çулта тата 1953 çулхи пĕрремĕш çурçуллăхра предприятисен ĕçне лайăхлатмарĕ. 1952 çулта ĕçе юрăхлă йывăç турттарса кăлармалли плана 82,5 процент кăна тултарнă. Вăрман хатĕрлемелли плана тултарманни нумай вăрманпромхозсенче механизмсемпе çителĕксĕр усă курнинчен, рабочисем нумай улшăнса тăнинчен, ĕçе япăх йĕркеленинчен, производствăри новаторсен тата малта пыракан предприятисен опытне начар сарса пынинчен килнĕ. Чылай вăрманпромхозсенче рабочисем валли пурăнмалли çуртйĕр тата культурăпа йăла тĕлĕшпе кирлĕ пек условисем туса паман, çав вăхăтрах ку ĕçсем валли государство уйăрса паракан укçа-тенкĕпе туллин усă курмаççĕ.

Производство планне, çавăн пекех продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелли задание пурнăçламаннине пула тата хуçасăрлăх пирки сухатусем тунине пула вăрман промышленность предприятийĕсем 1952 çула пысăк убыток туса вĕçлерĕç. СССР Вăрман тата хут промышленность министерстви производство экономикин ыйтăвĕсем çине тимлĕ пăхмасть. Министерство главнăй управленисемпе трестсен 1952 çулшăн тунă бухгалтери отчечĕсемпе балансĕсене пăхса тухман, çавна май министерствăна пăхăнса тăракан предприятисемпе организацисенче рентабельноçа ÿстерме, материалсемпе укçа-тенкĕ расходлас ĕçре перекетлĕх режимне пурнăçламалла тума кирлĕ мерăсем йышăнман.

Çаксем вĕсем пурте çакăн пек тума хушаççĕ: СССР Вăрман тата хут промышленность министерствин кирлĕ выводсем тумалла, предприятисене ертсе пырас ĕçе лайăхлатмалла, производство планне тата продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелли заданисене пурнăçламалла.

Пирĕн промышленноçăн, хуçалăхăн ытти отраслĕсен пекех, продукци туса кăлармалли, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелли тата накопленисене ÿстермелли плансене тултарма тата ирттерсе тултарма пур майсем те пур. Халĕ ĕнтĕ, Маленков юлташ Центральнăй Комитетăн ĕçĕсем çинчен партин XIX-мĕш съездĕнче туса панă отчетлă докладра каланă сăмахсемпе каласан, ĕç çакăнта: çав майсемпе пуррипе те пĕтĕмĕшпех усă курмалла, ĕçри çитменлĕхсене татăклăнах пĕтерсе пымалла, производствăра халиччен усă курман резервсене тупмалла, вĕсене халăх хуçалăхне вăйлатакан хăватлă çăлкуçĕ туса хумалла.

Бюджет комиссийĕ çакна палăртать: 1952 çулта строительство организацийĕсем нумайăшĕ капитальнăй строительство планне тата строительствăн хăйне ларакан хакне йÿнетмелли заданисене тултарман. Уйрăм министерствăсем укçатенкĕпе материальнăй ресурссене нумай йышлă стройкăсем тăрăх сапалантарса яраççĕ, çакă вăл строительство ĕçне вăрăха тăсать, капитальнăй ĕçсем валли хывнă укçа-тенкĕн усси час палăрмасть.

Сăмахран, СССР Çăмăл тата апат-çимĕç промышленность министерствин Ашкакай промышленность главнăй управленийĕн системинче 1953 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 16 холодильник туса пĕтермен, вĕсене темиçе çул каярах тума тытăннă пулнă. Çав вăхăтрах çĕнĕ объектсем тăваççĕ, çакă вара вăл пур укçа-тенкĕне туса пĕтермен стройкăсем валли парса тăма кансĕрлет.

Апат-çимĕç промышленноçĕн лимитсăр пуçне тăвакан объектсен строительствин планĕсене тата укçа-тенкĕ парса тăмалли плансене, кирлĕ таран сăлтав çук çинчех, улшăнусем кĕртнĕ фактсем пур. Сăмахран, Горький хулинчи «Волга» ятлă сăра заводĕн строительствин планне пилĕк хутчен улшăнусем кĕртнĕ, укçа-тенкĕ памалли плана 1952 çулхи март, июнь тата сентябрь уйăхĕсенче 1.130 пин тенкĕ пĕчĕкленĕ, ноябрьте вара ăна 500 пин тенкĕ ÿстернĕ. Верхне-Днепровскри кукурузăран крахмалпа патока тăвакан комбинат строительствине укçа-тенкĕ парса тăмалли çулталăкри плана 9 хутчен улăштарнă, плана пĕрре пĕчĕклетнĕ, тепре пысăклатнă.

Савăн пек «планлани» строительствăра йĕрkesĕрлĕх кÿрет, строительство хакне ÿстерет, ĕçсен планне пурнăçлас тĕлĕшпе стройка руководителĕсен ответлăхне чакарать.

Пирĕн çĕршывра пурăнмалли çурт-йĕр тăвасси анлă саралнă, вăл çултан-çул ÿсет. Пурăнмалли çурт-йĕр тăвас тĕлĕшпе 1953 çулхи пĕрремĕш çурçуллăхра капитальнăй ĕçсен пысăкăшĕ, иртнĕ çулхи çав тапхăрпа танлаштарсан, 7 хут ÿснĕ.

Анчах та пурăнмалли çурт-йĕр тумалли плана пурнăçлассишĕн кĕрешесси çине хуçалăх руководителĕсем, министерствăсем тата союзлă республикăсен Министрĕсен Совечĕсем пур çĕрте те тимлĕ пăхмаççĕ-ха.

Пурăнмалли çурт-йĕр туса пĕтерсе ĕçе кĕртмелли плана 1952 çулта СССР Строительство материалĕсем тăвакан промышленность министерстви 69 процент, СССР Хими промышленность министерстви—70 процент тултарнă, 1952 çулта Грузин ССР-ĕпе Азербайджан ССР-ĕнче пурăнмалли çурт-йĕр тумалли плана тултарман.

1953 çулхи пĕрремĕш çурçуллăхра та çавăн пек çитменлĕхсем пур. СССР Транспортпа йывăр машиностроени министерстви 1953 çулхи пĕрремĕш çурçуллăхра пурăнмалли çурт-йĕр туса пĕтермелли плана 38 процент кăна, СССР Машиностроени министерстви — 43 процент, СССР Вăрман тата хут промышленность министерстви 49 процент çеç тултарнă.

Хăшпĕр строительство организацийĕсем тăвакан ĕçĕн пахалăхĕ çине тимлĕ пăхмаççĕ. СССР Çĕр кăмрăк промышленность министерствин «Артемшахтстрой» трестĕн 2-мĕш номерлĕ стройуправленийĕ Донбасра Ленин ячĕпе тăракан 5-мĕш номерлĕ шахтăн «Победа» поселокĕнче пурăнмалли çуртсем туса пĕтерсе ĕçе кĕртнĕ, çав çуртсен пысăк çитменлĕхсем пур. Çав стройуправлени 1952 çулхи августра туса пĕтернĕ культура çуртне юсама халех нумай укçа-тенкĕ кирлĕ ĕнтĕ.

Чылай союзлă республикăсенче медицина учрежденийĕсемпе шкулсем тумалли план пурнăçланса пымасть. 1952 çулта ку плана Казах ССР-ĕпе Узбек ССР Министрĕсен Совечĕсем уйрăмах япăх тултарнă.

Министерствăсен тата союзлă республикăсен Министрĕсен Совечĕсен пурăнмалли çурт-йĕр тата культурăпа йăла тĕлĕшпе строительство планĕсене пурнăçласси çине тата тăвакан ĕçсен пахалăхĕ çине тимлĕрех пăхас пулать.

Çакна палăртмалла: строительство хакне йÿнетсе пынине, смета дисциплинине пурнăçланине, шалти ресурссене мобилизациленине пысăк срокпăха кивçен укçа-тенкĕ парса тăракан банксем çаплах çителĕксĕр тĕрĕслесе тăраççĕ, вĕсем строительство мĕншĕн хакла ларнин чăнчăн сăлтавĕсене пур чухне те уçса палăртмаççĕ, ĕçе ямалли объектсене туса пĕтерме укçа-тенкĕпе материальнăй ресурссем парса тăрассишĕн çителĕксĕр кĕрешеççĕ.

Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви наукăна аталантарассишĕн тата чечеклентерессишĕн куллен тăрăшаççĕ. Пирĕн çĕршывра ăслăлăхпа тĕпчев учрежденийĕсене йышлăн уçнă. Наукăна аталантарма государство çуллен укçатенкĕ нумай уйăрса парать. Совет ученăйĕсем халăх хуçалăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ нумай проблемăсене татса пачĕç.

Социализмла ялхуçалăхне вăйлатма ялхуçалăх науки пысăк ĕç турĕ, çапах та вăл колхозпа совхоз производстви ыйтăвĕсенчен юлса пырать-ха. Хăшпĕр ялхуçалăх институчĕсем уйрăм ыйтусем тăрăх нумай çул хушши тĕпчев ĕçĕсем тăваççĕ, анчах çав ĕçсем, вĕсене тума вăхăт иртернĕ тата укçа-тенкĕ нумай тăкакланă пулин те, практикăлла результатсем памаççĕ-ха. Институтсем нумай сĕнÿсене чылай кая юлса, вĕсене ялхуçалăх производствине тахçанах кĕртнĕ хыççăн тин тăратаççĕ. Савăнпа та, сăмахран, 1952 çулта В. И. Ленин ячĕпе тăракан ялхуçалăх наукисен Академийĕн удобренисем, агротехника тата почвоведени енĕпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри ăслăлăхпа тĕпчев институчĕ тăратнă 20 сĕнÿрен пĕрине кăна йышăннă.

СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин тата ялхуçалăх наукисен Академийĕн ăслăлăхпа тĕпчев институчĕсене ертсе пырас ĕçе лайăхлатни, ялхуçалăх умĕнче тăракан задачăсене татса парас ĕçре вĕсен рольне ÿстерни кирлĕ.

Депутат юлташсем! СССР 1951 çулхи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен тунă отчета тата СССР 1952 çулхи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен тунă отчета бюджет комиссийĕ пăхса тухрĕ. СССР Государство бюджетне çав çулсемшĕн пурнăçлани çинчен СССР Финанс министрĕ Зверев юлташ каласа пачĕ ĕнтĕ.

СССР Государство бюджетне 1951 тата 1952 çулсенче пурнăçланине кăтартакан отчетсене, СССР Министрĕсен Совечĕ тăратнăскерсене, бюджет комиссийĕ улшăнусем кĕртмесĕрех çирĕплетме сĕнет.

Çакăнпа пĕрлех Бюджет комиссийĕ 1952 çулта бюджет умĕнче хăйсен обязательствисене пурнăçламан министерствăсене—çăмăл тата апат-çимĕç промышленность, строительство, çĕр кăмрăк промышленность тата ытти министерствăсене 1953 çулта предприятисемпе организацисен финанспа хуçалăх ĕçне лайăхлатма кирли çинчен асăрхаттарма кирлĕ тесе шутлать, мĕншĕн тесен, çав предприятисемпе организацисем пĕлтĕр хуçасăрлăха пула пысăк тăкаксем турĕç, продукцин хăйне ларакан хакне ÿстерчĕç тата таварпа япаласен ытлашши запасне туса хучĕç.

Халăх хуçалăхне аталантармалли Государство планне тултарасси тата ССР Союзĕн 1953 çулхи Государство бюджетне пурнăçласси хуçалăхпа финанс органĕсене хăйсен ĕçне малашне лайăхлатма хушаççĕ. Министерствăсен руководителĕсен экономикăлла ĕçĕн шайне хăпартмалла, кашни предприятие, унăн хуçалăхпа финанс ĕçне тĕплĕн пĕлсе ертсе пымалла.

СССР Финанс министерствин хуçалăхăн отраслĕсемпе предприятисен финанспа хуçалăх ĕçĕнчи çитменлĕхĕсене палăртас ĕçе вăйлатмалла, çав çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтермелле тăвас пулать.

СССР Финанс министерстви тата вырăнти финанс органĕсем ку тĕлĕшпе чылай ĕçсем тăваççĕ. Анчах вĕсем çапах та перекетлĕх режимне тытса пынине, халăх хуçалăхĕнчи резервсене тупса палăртас ĕç мĕнле тăнине çителĕксĕр тĕрĕслеççĕ. Хаксем мĕнле пулса пыраççĕ, продукцин хăйне ларакан хакĕ мĕнле, предприятисенчи ытлашши, кирлĕ мар материалсемпе таварсене вырнаçтарас ĕç мĕнле тăрать, халăх хуçалăхĕнчи расчетсене лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçсем мĕнле—çавăн пек ыйтусем çине тивĕçлипе пăхмаççĕ-ха.

Финанс планне тултарнине, перекетлĕх режимне тытса пынине социализмла харпăрлăха упранине контроль тăвас ĕçре ведомствăсен хăйсен шалти контролĕ пысăк вырăн йышăнать. Çав хушăрах çак контроль аппарачĕ министерствăсенче çителĕксĕр ĕçлет. Организацисемпе учрежденисен уйрăм руководителĕсем ведомствăн шалти финанс контрольне йĕркелессине хакламаççĕ, контроль аппаратне ертсе пырас ĕçе пĕтĕмпех аслă бухгалтерсене шанса параççĕ.

Нумай чухне ревизисене кирлĕ пек тумаççĕ, ревизисен результачĕсем тăрăх чылай вăхăтчен решенисем йышăнмаççĕ, çавăн пирки ревизисен пĕлтерĕшĕ те чакать. Çапла, сăмахран, СССР Çăмăл тата апат-çимĕç промышленность министерствин табак промышленноçĕн тĕп управленийĕ уйрăм предприятисене ревизи тунин результачĕсем тăрăх пĕрер çул е ытларах та приказсем кăлармасăр ларнă. СССР Хими промышленность министерствин сăрт-тупа хими промышленноçĕн тĕп управленийĕ уйрăм предприятисене 1952 çулхи иккĕмĕшпе виççĕмĕш кварталсенче тунă ревизин результачĕсем тăрăх юлашки вăхăтченех решени йышăнман.

Кунта каланинчен ведомствăн шалти контрольне пур министерствăсенче те вăйлатма кирли курăнать. СССР Финанс министерствин ытти министерствăсенче, учрежденисенче тата организацисенче ведомствăсен шалти финанс контроль ĕçне вăйлатмалла, СССР Государство контролĕн министерствипе пĕрле унăн çав аппарат ĕçне лайăхлатмалли майсем çинчен Правительствăна сĕнÿсем тăратмалла.

Депутат юлташсем! Совет халăхĕ экономикăпа культурăна аталантарас ĕçре тунă çитĕнÿсем партин XIX-мĕш съезчĕ пирĕн çĕршывăн халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсене те çĕклеме палăртнă программа ăнăçлă пурнăçланса пынине кăтартса параççĕ.

Пирĕн çĕршывăн çитĕнĕвĕсем мире юратакан прогрессивлă этемлĕхе пĕтĕм тĕнчери мире сыхлассишĕн тата тĕреклетессишĕн кĕрешме хавхалантараççĕ.

Корейăра перемири тăвасси çинчен пынă калаçусем ăнăçлă вĕçленни мирпе демократи лагерĕн пысăк çĕнтерĕвĕ пулса тăрать тата мире юратакан халăхсем мирĕн аслă ĕçĕ çĕнтерессине шанчăклăн ĕненессине çирĕплетет.

1953 çулхи халăх хуçалăх планне тата Государство бюджетне ăнăçлă пурнăçланипе совет çыннисем пирĕн юратнă Тăван çĕршыва вăйлатас, мире тĕреклетес тĕлĕшпе çĕнĕ пысăк ĕç тăваççĕ.

Совет Союзĕнчи халăхсем, аслă, никам çĕмĕрейми, тăванла çемьене пĕрлешнĕскерсем, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе малалла, коммунизм строительствин çĕнĕ çитĕнĕвĕсем патнелле шанчăклăн каяççĕ. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Торф кăларакансен çитĕнĕвĕ

Атăл леш енчи торф предприятийĕн коллективĕ государство планне срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăртăва тухнăччĕ. Ăмăртура илнĕ обязательствăсене пурнăçласа, коллектив ĕç хăвăртлăхне ÿстернĕçемĕн ÿстерсе пырать. Торф касса кăлармалли сезонти плана срокчен 12 кун маларах тултарнă.

Çак çитĕнÿ торф кăлармалли сезона лайăх хатĕрленнинчен чылай килчĕ. Торф кăлармалли машинăсене пурне те сезон пуçланнă тĕле лайăх юсаса хатĕрленĕ.

Механизаторсем техникăна лайăх вĕренсе çитрĕç, çавна май ĕç тухăçлăхне палăрмаллах ÿстерчĕç. 1950 çулхипе танлаштарсан, кашни машинăпа икĕ хут ытларах, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 20 процент ытларах торф кăларнă.

Елизавета Тимофеева, Нурзиян Фасхутдинова, Анастасия Лукина, Лидия Захарова тата ытти юлташсем ертсе пыракан бригадăсем сезонти плана срокчен тултарчĕç. Елизавета Тимофеева ертсе пыракан бригада планран ирттерсе 1.200 тонна лайăх пахалăхлă торф кăларма обязательство илнĕ. Панă сăмаха бригада чыслăн пурнăçларĕ.

Иртнĕ çулсенче смена хушшинче 70 пин кирпĕч торф кăларма май çук тесе шутланă. Кăçал вара чылай бригадăсем нормăпа 38 пин кирпĕч торф кăларас вырăнне 70—75-шер пин кирпĕч кăлараççĕ.

Бригадăсем уйрăмах июньпе июль уйăхĕсенче ăнăçлă ĕçлерĕç. Торф кăлармалли куллен графика 120—130 процента çити тултарса пынă. Торф кăларнă çĕрте ĕçлекен 22 бригадăран 16-шĕ хăйсен сезонти заданийĕсене срокчен тултарчĕç.

Халĕ коллектив хăй çине илнĕ обязательствăна пурнăçлассишĕн—планран ирттерсе 5 пин тонна торф кăларассишĕн кĕрешет.

Социализмла ăмăртура уйрăмах тĕп участок пысăк çитĕнÿ турĕ. Ку участок коллективĕ торф кăлармалли плана срокчен 15 кун маларах тултарчĕ тата планран ирттерсе 3 пин тонна пысăк пахалăхлă торф кăларчĕ.

Анчах та тунă çитĕнÿсемпе кăмăлланса ларни пысăк йăнăш пулнă пулĕччĕ. Кăларнă торфа вăхăтра типĕтсе пухса хумалла, çапла вара Атăл леш енчи электростанци татти-сыпписĕр ĕçлесе, хулари промышленноçа электроэнерги çителĕклĕ патăр тесе тăрăшмалла.

С. ХРИСТОФОРОВ.

Атăл леш енчи торф предприятийĕн главнăй инженерĕ.

Колхозниксемпе механизаторсем! Тăванла виçĕ республика ăмăртăвĕнче илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлар!

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Августăн 5-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тыръ вырнă	Комбайнсемпе вырнă	Капана хывнă	Авăн çапнă	Пуса татнă
Муркаш	51	18	25	14	66
Етĕрне	50	24	44	31	32
Советски	50	17	43	12	72
Красноармейски	48	15	20	9	66
Чурачăк	48	17	38	15	58
Елчĕк	48	14	20	16	57
Шăхасан	47	18	29	18	43
Хĕрлĕ Чутай	45	23	39	14	42
Комсомольски	44	12	23	18	41
Калинино	43	18	25	14	47
Чкаловски	43	13	25	19	27
Элĕк	42	15	33	12	55
Вăрмар	41	14	34	18	11
Çĕрпÿ	41	24	26	23	28
Шупашкар	40	21	26	18	29
Октябрьски	40	22	19	16	12
Первомайски	39	11	12	22	43
Ишлей	38	20	22	18	11
Сĕнтĕр	38	15	10	11	31
Тăвай	38	14	17	21	7
Вăрнар	36	17	14	24	70
Çĕмĕрле	36	16	34	17	—
Шăмăршă	35	16	23	23	6
Канаш	35	17	10	15	16
Кÿславкка	35	22	24	30	3
Йĕпреç	34	24	50	31	60
Кувакино	32	23	33	65	—
Улатăр	31	18	—	44	—
Сĕнтĕрвăрри	30	15	14	25	33
Пăрачкав	24	20	52	63	—

ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАМАЛЛИ 1953 ÇУЛХИ ПЛАНА АВГУСТĂН 5-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Плана тултарнă
Етĕрне	29,2
Кувакино	25,1
Пăрачкав	24,4
Кÿславкка	22,9
Шăхасан	22,4
Шупашкар	21,8
Тăвай	18,3
Улатăр	17,7
Вăрмар	17,2
Ишлей	16,8
Çĕрпÿ	15,8
Советски	14,5
Муркаш	14,4
Канаш	13,7
Сĕнтĕрвăрри	13,5
Октябрьски	13,2
Йĕпреç	13,0
Чурачăк	12,7
Елчĕк	12,1
Красноармейски	11,2
Хĕрлĕ Чутай	10,6
Вăрнар	9,6
Комсомольски	8,7
Калинино	8,5
Сĕнтĕр	7,4
Çĕмĕрле	7,3
Первомайски	6,4
Чкаловски	6,4
Шăмăршă	6,1
Элĕк	4,4

* * *

Çак сводкăсенчен республикăри чылай районсенче тырпул пухса кĕртес ĕç ситлĕксĕр пулса пыни курăнать. Августăн 5-мĕшĕ тĕлне республикăра, пĕрле илсе шутласан, 40 процент тыррă выpca пуçтарнă, Муркаш, Етĕрне, Советски районĕсенче вырмалли тырăсенчен сурринe выpca пĕтернĕ. Çав хушăрах Пăрачкав районĕнче (райисполком председателĕ Ногаев юлташ, КПСС райкомĕн секретарĕ Жирков юлташ) пĕтĕмпе те 24 процент кăна вырнă. Юлашки пилĕккунлăхра ку районта малтанхинчен 5,6 процент кăна ытларах вырнă. Район республикăра 21-мĕш вырăнта пулнă пулсан, халĕ ĕнтĕ пуринчен те кая тăрса юлчĕ.

Тырпул пухса кĕртес тĕлĕшпе çак районсем те кая юлса пыраççĕ: Сĕнтĕрвăрри (райисполком председателĕ Чумакова юлташ, парти райкомĕн секретарĕ Романов юлташ), Улатăр (Русинапа Поверенов юлташсем), Кувакино (Леоновпа Дубов юлташсем), Йĕпреç (Васильковпа Багров юлташсем), Шăмăршă (Васильевпа Иванов юлташсем), Вăрнар (Ивановпа Александров юлташсем). Ку районсенче 30 процентран пуçласа 36 процент таран кăна тыррă вырнă.

Çак районсемпе ытти хăшпĕр районсенчи чылай колхозсенче кĕрхи тырăсене те выpca пĕтермен, çурхи тырăсем пĕтĕмĕшпех пулса ситнĕ пулин те, вĕсене вырма сÿрĕккĕн тытăнаççĕ.

Кая юлса пыракан колхозсенче халĕ ĕнтĕ вăхăтра вырман пирки тырпул тăкăнса юлас хăрушлăх тухса тăрать. Анчах та çак колхозсен, машина-трактор станцийĕсен, ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленисен руководителĕсем тырпул пухса кĕртессине хăвăртлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Парти райкомĕсемпе райисполкомсем тата республикăри ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви ĕç вăраххăн пынипе килĕшсе пурăнаççĕ.

Республикăри нумай районсенче тырпул пухса кĕртес ĕçре комбайнсемпе начар усă кураççĕ. Республикăри тырпулсен нумайрах пайне алăпа тата колхозсенчи жнейкăсемпе вырнă. МТС-сен, ялхуçалăх органĕсен тата партипе совет организацийĕсен руководителĕсем комбайнсемпе ĕçлессине тивĕçлĕ вырăна хумаççĕ, комбайнсене тырпул пухса кĕртес ăнăçлăха татса паракан тĕп машина вырăнне хурса хакламаççĕ. Канаш, Сĕнтĕр, Чкаловски, Елчĕк МТС-ĕсенче кашни юсавлă комбайн пуçне 30—32-шер гектар кăна вырнă. Çав хушăрах республикăри малта пыракан комбайнерсем 160—190-шар гектар вырнă. Сăмахран, Етĕрне МТС-ĕнчи комбайнер М. Широнов юлташ «С-6» комбайнпа 195 гектар, Сурмайдан МТС-ĕнчи комбайнерсем Н. Горшковпа М. Кукаев юлташсем 160-шар гектар вырнă.

Республикăри колхозсенче тăкаксемпе кĕрешес ĕç те кирлĕ вырăнта тăмасть. Чылай колхозсенче тыррă ÿкнĕ, çавна пула вырнă чухне тăкаксем пулаççĕ. Анчах та комбайнсемпе тата ытти машинăсемпе вырнă участоксенче пучахсене кĕреплесемпе тата алăпа пуçтарас ĕçе йĕркелемен. Вырнă тырпула турттарас тата капана хывас ĕç питĕ ситлĕксĕр пулса пырать. Турттарса капана хывас ĕçре уйрăмах Сĕнтĕрвăрри, Первомайски тата Сĕнтĕр районĕсем юлса пыраççĕ. Нумай районсенче авăн çапасси начар пулса пырать. Çанталăк условийĕсем лайăх пулсан та, чылай колхозсенче МТС молотилкисемпе тата лашапа ĕçлемелли молотилкăсемпе туллин усă курмаççĕ

Республика государствăна тыррă парас тĕлĕшпе пирĕнпе ăмăртса ĕçлекен Мордва тата Мари АССР-ĕсенчен юлса пынине халĕ те пĕтерсе ситереймен. Тыррă парас тĕлĕшпе Етĕрне, Кувакино, Пăрачкав, Кÿславкка, Шăхасан, Шупашкар районĕсем малта пыраççĕ. Çак районсем тырă парас ĕçе хăйăх йĕркеленĕ май, август уйăхĕн пĕррĕмĕш пилĕккунлăхĕнче государствăна тыррă памалли çулталăкри заданин 15—20 процентне пурнăçларĕç.

Государствăна тыррă парас ĕçе Тăвай, Улатăр, Вăрмар, Ишлей районĕсем те чылай лайăхлатрĕç. Çак районсем иртнĕ пилĕккунлăхра çулталăкри плана 12,5 процентран пуçласа 14 процент таран тултарма пултарчĕç.

Республикăри малта пыракан ялхуçалăх артелĕсем — Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тата Маленков ячĕпе тăракан, Вăрмар районĕнчи «Красная Кубня» колхозсем государство умĕнчи пĕррремĕш тивĕçе пурнăçларĕç. Анчах та нумай районсенче государствăна тыррă парас ĕç ситлĕксĕр пулса пырать. Тыррă парас ĕç уйрăмах Элĕк районĕнче (райисполком председателĕ Ярдухин юлташ, КПСС райкомĕн секретарĕ Федоров юлташ) начар пулса пырать. Иртнĕ пилĕккунлăхра ку районта çулталăкри тыррă памалли планăн 3,1 процентне кăна тултарнă. Çапла вара район 24-мĕш вырăнтан 30-мĕш вырăна чакса ларчĕ. Шăмăршă районĕнчи (Васильевпа Иванов юлташсем) иртнĕ пилĕккунлăхра çулталăкри планăн 5,5 процентне кăна тултарнă. Первомайски районĕ (Савиновпа Кураков юлташсем) 5,3 процент кăна тыррă панă. Район 28-мĕш вырăна чакса ларнă. Государствăна тыррă парас тĕлĕшпе Чкаловски, Шăмăршă, Сĕнтĕр, Калинино районĕсенчи партипе совет руководителĕсем Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕ панă задание тултараймарĕç. Çак районсенче авăн çапма тата государствăна тыррă пама тытăнман колхозсем те пур-ха. Анчах та партипе совет организацийĕсем тыррă парас ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Государствăна тыррă парас тĕлĕшпе «Заготзерно» кантурĕн автобазисем питĕ начар ĕçлеççĕ. Республикăри «Заготзерно» кантурĕн управляющийĕ Казаков юлташпа Канашри тата Улатăрти автобазăсен директорĕсен Баранинпа Барладян юлташсен айăпĕпе мĕнпур автомашинăсен виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ тыррă турттарас ĕçе хутшăнмасть. Правительство постановленийĕ тăрăх предприятисемпе учрежденисенчен уйăрнă автотранспорт та питĕ начар ĕçлет. Хăшпĕр предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем дисциплинăна пăхăнманнипе пула, тыррă турттарма уйăрнă автотранспортăн чылай пайĕ тыррă турттарма пуçăнман.

Халĕ тырпул пухса кĕртес тата государствăна тыррă парас ăнăçлăха татса паракан вăхăт ситрĕ. Пирĕн умра çакăн пек задача тăрать: çак кунсенче мĕнпур вăя тырпула кĕске срокра пухса кĕртме, государствăна тыррă памалли плана тултарма мобилизацилемелле. Тырпул пухса кĕртес ĕçре тĕп вырăн йышăнса тăракан машинăсемпе—комбайнсемпе туллин усă курмалла. Комбайнсемпе чи лайăх участоксенче, вăйлă тырпул ÿснĕ участоксенче ытларах ĕçлемелле. Тыррă вырнă çĕрте ытти машинăсемпе те туллин усă курмалла. Жнейкăсемпе туллин усă курас тесе, вĕсемпе 2—3-шер смена ĕçлемелле тумалла. Кĕлте турттарса капана хывассипе авăн çапассине уйрăмах вăйлатса пыни кирлĕ.

Партипе совет организацийĕсен, колхозсен тата мĕнпур колхозниксен хăйсен ĕçне тырпула кĕске срокра выpca пĕтерес, государствăна срокчен тыррă парса татас тĕллеве пăхăнтарса тумалла. Эпир хамăр республика государствăна тыррă парас тĕлĕшпе Мордва тата Мари АССР-ĕсенчен юлса пынине пĕтерме тивĕç. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе парти обкомĕ государствăна тыррă парас енĕпе районсене пилĕккунлăха паракан пысăк мар заданисене кашни колхоз, кашни район тултарса тата ирттерсе тултарса пытăр.

Тырпул пухса кĕртес тата государствăна тыррă парас ĕçсене кĕрхи ака ĕçĕсемпе пĕр вăхăтрах тата тĕрĕс йĕркелесе туса пымалла. Кĕрхи тырăсене кашни колхозрах агротехника тĕлĕшĕнчен кĕске срокра, августăн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр акса хăвармалла.

* * *

Ял Совет сессийĕ тырпул пухса кĕртес ĕç çинчен

КАЛИНИНО. Çак кунсенче Уйкас Юнтапа ял Совечĕн сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси Каганович ячĕпе тăракан колхозра тырпул пухса кĕртес тата государствăна тыррă парас ĕçсем мĕнле пыни çинчен сÿтсе яврĕ. Çак ыйтупа ял Совечĕн ялхуçалăх комисси председателĕ депутат С. Сотников тата колхоз председателĕ К. Андреев юлташсем доклад туса пачĕç.

Колхоз тырпул пухса кĕртме вăхăтра тытăннă. Тыррă вырнă çĕрте колхозниксем сдельщина йĕркипе ĕçлеççĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ ĕç нормине иртерсе тултарать.

Колхозра сăлтавсăр ĕçе тухман колхозниксем çук. Тырпул пухса кĕртес ĕçе штатри работниксемпе выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем, шкул ачисемпе аслă шкулсенче вĕренекенсем те активлă хутшăнаççĕ. Уйра ĕçлекенсем валли столовăй организациленĕ те колхозниксен ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшать.

Анчах та колхоз ыраша планпа пăхнинчен 2—3 кун кая юлса выpca пĕтерчĕ. Мĕншĕн тесен машинăсемпе туллин усă курман. Тăватă жнейкăран иккĕшĕ кăна ĕçлеççĕ.

Колхоз авăн çапма, государствăна тыррă пама тытăнман. Государствăна тыррă леçме транспорт бригади организацилемен. Транспорт хатĕрĕсем çитмеççĕ.

Колхоз выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе ситлĕксĕр ĕçлет. Паянхи куна 70 гектар çинчи утăна çулса пĕтермен, силос хывмалли плана 23 процент кăна тултарнă.

Ял Советĕнче медицина пункчĕ пур, унта ĕçлекен Н. Моисеева фельдшерица тыррă выракан колхозниксене кирлĕ пулăшу пама уй-хире сайра хутра тухать. Сессире тухса каланă депутатсемпе активистсем ăна хытă критиклерĕç. Колхозра массăлла-политикăлла ĕçе япăх йĕркеленĕ. Вулав çуртĕн заведующийĕ М. Калошев юлташ хирте пулса курмасть.

Сесси тырпул пухса кĕртес ĕçри ситменлĕхсене шута илсе тивĕçлĕ решени йышăнчĕ. Колхоз правленине тырпула кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме, государствăна тыррă памалли плана срокчен тултарма, кĕрхи тырăсене вăхăтра, пысăк пахалăхпа акса хăварма тата ытти ялхуçалăх ĕçĕсене те вăхăтра туса пыма хушса хăварчĕ. Сесси ял Совечĕн ялхуçалăх комиссине тата ял Совет исполкомне (председателĕ Д. Угинева) колхозра тырпул пухса кĕртес ĕçе тĕрĕслесе тăма, ситменлĕхсене вăхăтра палăртса, вĕсене пĕтерессишĕн тимлĕн ĕçлеме хушса хăварчĕ.

И. ДИМИТРИЕВ.

Ĕç хăвăртлăхне ÿстермелле

СĔНТĔР. Районти пур колхозсем те тенĕ пекех кĕрхи тырăсене 8—10, çуртрисене 10—12 кун хушшинче выpca пĕтерме палăртнă. Ĕçе тĕрĕс организацилесен, колхозсен пĕтĕм ĕç вăйĕпе тата МТС техникипе туллин усă курсан, çак срока татах та кĕскетме пулать. Çакна малта пыракан колхозсен опычĕ питех те ĕнентерÿллĕн çирĕплетсе парать. Акă «Ударник» колхоз пĕр эрнере ыраш выpca пĕтерчĕ. «Броневик» колхоз та кĕрхи тырăсене ĕç планĕпе палăртнă срокран маларах выpca пĕтерчĕ. Кун пек тĕслĕхсем татах илсе кăтартма пулать.

Колхозсем массăллăн тыррă вырма тытăннăранпа икĕ эрне иртрĕ. Апла пулин те чылай колхозсенче вырман ыраш халĕ те уйĕ-уйĕпе саралса выртать. Хăшпĕр колхозсенче кĕрхи тырăсене сурринe яхăн кăна вырма ĕлкĕрнĕ.

Районта тырпул пухса кĕртесси çакăн пек ситлĕксĕр хăвăртлăхпа пулса пыни чи малтанах ĕçе тĕрĕс организацилеменнинчен, комбайнсемпе тата тыррă вырмалли ытти машинăсемпе начар усă курнинчен килет. Комбайнсем колхозсен уй-хирĕсенче виç-тăватă кун кая юлса, июлĕн 27—28-мĕшĕсенче кăна ĕçе тытăннă. Çакăн хыççăн та вĕсем тухăçлă ĕçлеймерĕç. Вунă кун хушшинче, пур комбайнсемпе те йĕркеллĕ ĕçленĕ пулсан, вĕсемпе сахалтан та 1.500 гектар çинчи тырпула пухса кĕртме май пулнă. Анчах вĕсем çак хисепĕн сурринe те ĕçлесе ситереймен-ха. Колхозсемпе тунă договорсем тăрăх, комбайнсемпе виçĕ пин гектар тыррă выpca пухмалла.

— Плана тултаратпăрах, ыраш вырнă çĕрте начар ĕçлерĕмĕр пулсан, çуртри ытларах выpca пуçтарăпăр, — тесе хăйне-хăй лăплантарать МТС директорĕ Кушников юлташ.

Çакăн пек лăпланса ларма нимĕнле сăлтав та çук. Чылай комбайнсем техникăлла кăлтăксем пирки тухăçлă ĕçлеймеççĕ. Сăмахран, «Знамя», Калинин ячĕпе, Ленин ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсенче ĕçлекен комбайнерсем эрне хушшинче те икĕ кунхи ĕç нормине тултарайман. Вĕсен комбайнĕсем ĕçлеме тытăннă хыççăн малтанхи сехетсенчех чарăнса ларнă. МТС механикĕ Осипов юлташ колхозсен уйĕсенчи комбайнсене çийĕнчех юсаса ĕçе ярас тĕлĕшпе комбайнерсене тивĕçлĕ пулăшу памасть, хăйĕн участокĕнчи бригадăсене сахал тухса çÿрет.

Машина-трактор станцин пĕтĕмпе 16 комбайн. Хальхи вăхăтра 5 комбайнер кăна сменăри ĕç нормине тултарать. Ытти комбайнсем йĕркеллĕ ĕçлеменнин тĕп сăлтавĕ—вĕсем техника тĕлĕшпе юсавлă марри. Çак ситменлĕхсене халех пĕтермесен, çуртри вырнă çĕрте те пысăк чăрмавсем пулма пултараççĕ.

Комбайнсем тухăçлă ĕçлесси вĕсене колхозсем енчен кирлĕ пек пулăшса пынинчен, комбайн агрегачĕсемпе уй-хир бригадисем туслăн килĕштерсе ĕçленинчен нумай килет. Çак тĕлĕшпе те пысăк ситменлĕхсем пур-ха. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз уйĕнче «Коммунар» комбайн ыраш пулса ситнĕ хыççăн 5—6 кун хушши ĕçлемесĕр ларнă, мĕншĕн тесен колхоз председателĕ Н. Бочкарев юлташ комбайн патĕнче ĕçлеме пĕр çын та уйăрса паман. Çав вăхăтрах 50—60 колхозник вăрманта хăйсем валли утă хатĕрленĕ. Çак «ĕçрен» Бочкарев юлташ хăй те пăрăнса юлман. Бункерти тырра вăхăтра пушатса тăман пирки, кунта комбайн халĕ те час-часах ĕçлемесĕр ларать. Комбайнпа ĕçлекенсем район центрне (3 километра) апат çиме çÿресе нумай вăхăт иртереççĕ. «Хлебороб» колхозра комбайн ĕçленĕ çĕре шыв турттарассине йĕркелемен.

Тырпул пухса кĕртес ĕçĕн хăвăртлăхне чакаракан тепĕр сăлтав—вăл жнейкăсемпе ситлĕклĕ усă курманни. МТС жнейкисем колхозсенче хуçасăр сапаланса выртаççĕ. Ку тарана çитсе ыраш уйне пĕр жнейка та тухса курман.

Хăшпĕр колхозсенче комбайнсем çине шанса, хăйсен ĕç вăйĕпе пачах ситлĕксĕр усă кураççĕ. Мичурин ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Щербаков юлташ) вăйпитти колхозниксенчен 20 проценчĕ тырпул выpca пуçтарас ĕçе хутшăнмасть. Пĕррремĕш уй-хир бригадин бригадирĕ Д. Герасимов ĕç дисциплинине хăй пăсса пырать. Хĕрсе тыррă вырнă вăхăтра вăл 4 кун хушши хăй валли утă хатĕрлесе çÿрерĕ. Кунсăр пуçне, вăл хăйĕн бригадинчи колхозниксене ыраша çур метр таран çÿлтен вырма, кайран хăмăлне хăйсем валли çулма ирĕк парса, колхоза хирĕçле ĕç тунă. Ĕç дисциплини япăххине пула, кунта кĕрхи тырăсене сурринe те выpca пуçтарман. Авăн çапасси çинчен шутламаççĕ те.

Тырпул пухса кĕртес тĕлĕшпе çавăн пекех «Прожектор» колхоз (председателĕ Пегасов юлташ) питĕ юлса пырать. Артелĕн 177 гектар ыраш выpca пуçтармалла пулсан, иртнĕ вунă кун хушшинче сурринe яхăн çеç вырнă.

Вăхăт кĕтмест. Кĕрхи тырăсем уйра ларнă çĕртех тăкăнма пуçланă. Çуртрисем те пулса ситнĕ. Тырпула пухса кĕртес ĕçе кунтан-кун хăвăртлатса пыни кирлĕ.

«Коммунизм ялавĕ» хаçатăн коллективлă корреспонденчĕ—Сĕнтĕр районĕнчи «Ĕç ялавĕ» хаçат.

Колхоз чысĕшĕн

МУРКАШ, августăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсен колхоз чысĕпе Тăван çĕршыв чысĕшĕн кĕрешесси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Çакна тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтри хастарлă ĕç тепĕр хут уçăмлăн кăтартса парать.

Июль уйăхĕн юлашки кунĕсенче эпир ыраша суйласа вырма тытăнтăмăр. Тепĕр ик-виçĕ кунтан вăл талкăшпех пулса ситрĕ. Вара уй-хирте кунсерен 350—400 çын, комбайн тата 5 жнейка ĕçлеме пуçларĕ. Малтанхи кунсенчен пуçласах, социализмла ăмăрту вăйланса пычĕ. Ăна организацилекенсем коммунистсемпе комсомолецсем пулчĕç.

Халĕ колхозра тырпул пухса кĕртес ĕç ăнăçлă пырать. Ыраш выpca пĕтернĕ. Тăватă бригада пăрса çулса пухас ĕçе вĕçлерĕ, пĕр бригада вика пухса кĕртрĕ. Паян комбайн юлашки участокри кĕрхи тулла выpca çапать, 7-мĕш бригада сĕлĕ вырать.

Çак кунсенче колхоз итемĕсем çинче те хĕрÿ ĕç пĕр самантлăха та лăпланмасть. МТС-ăн сложнăй молотилки кунĕн-çĕрĕн кĕрлет. Кунсăр пуçне колхозăн виçĕ молотилка электричество вăйĕпе ĕçлет. Пĕррремĕш тата улттăмĕш бригадăсем ыраш çапса пĕтерчĕç.

Пирĕн колхоз членĕсем Тăван çĕршыв умĕнчи пĕррремĕш тивĕçе — государствăна тыррă памалли плана сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурнăçлама пулчĕç. Халĕ икĕ автомашинăпа татти-сыпписĕр тыррă леçетпĕр. Август уйăхĕн малтанхи пилĕккунлăхĕнче колхозăн государствăна 450 центнер тыррă памаллаччĕ, эпир 700 центнер ытла патăмăр.

Ытти ĕçсене те эпир вăхăтра тума тăрăшатпăр. Выльăх-чĕрлĕхе тутă тата ăшă витесенче хĕл каçарма тимлĕн хатĕрленетпĕр. Бригадăсем паян-ыран кĕрхи тырăсем акма тухаççĕ. Кĕскен каласан, ялхуçалăх ĕçĕсене кăçал та ăнăçлă иртеретпĕр.

А. МОИСЕЕВ,
«Красное Сормово» колхоз председателĕ.

Совет Союзĕпе Аргентина пĕлтерни

Совет Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Аргентина Республики хушшинче суту-илÿпе тÿлевсем пирки килĕшÿ туни çинчен

Кăçалхи августăн 5-мĕшĕнче Аргентина Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен тата Культсен Министерствинче Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Аргентина Республики хушшинче суту-илÿпе тÿлевсем çинчен килĕшÿ çине алă пуснă.

Çапла ĕнтĕ, Мускавра пуçланнă, унтан Совет Союзĕн Н. Н. Чеклин ертсе пыракан суту-илÿ делегацийĕ Буэнос-Айресра малалла туса пынă калаçусем вĕçленнĕ. Калаçусем пĕр-пĕрне чĕререн ăнланнипе иртнĕ. Çакăн çинчен икĕ енĕ те, икĕ çĕршывăн ыйтăвĕсене шута илсе, тавар çаврăнăшне ытларах ÿстерме интересленни каласа парать.

Çак килĕшÿ тăрăх, Совет Союзĕ Аргентинăна нефть тата çĕр кăмрăкĕ чылай, çавăн пекех тата кĕтмелле тÿленипе промышленность оборудованийĕ тăратать. Ку шута нефть кăларакан, çĕр кăмрăкĕ кăларакан тата электроэнерги промышленноçĕ валли кирлĕ оборудованипе материалсем, чугун çул оборудованийĕ, тракторсем, ялхуçалăх машинисем кĕреççĕ. Кусемсĕр пуçне Совет Союзĕ чĕр-тавар материалĕсем, металлурги промышленноçĕ туса кăларакан продукци тăратать. Ку шута металран хатĕрленĕ материалсем, чугун, хурçă листисем, рельссем, бандажсемпе тĕнĕлсем, хурансем валли трубасем, хуран тимĕрĕ, нефть промышленноçĕ валли трубасем кĕреççĕ. Совет Союзĕ тăратакан таварсен списокне çавăн пекех тата химипе медицина таварĕсем, асбест, тĕрĕс виçмелли инструментсем, нефть продукчĕсем кĕреççĕ.

Килĕшÿ вăй илсе тăнă малтанхи çулталăк хушшинче Аргентина Совет Союзне тăратакан таварсем хушшинче йĕтĕн çăвĕ тата çăм пысăк вырăн йышăнса тăрать, вĕсем Совет Союзне тăратма палăртнă таварсем хушшинче, хакĕ енчен шутласан, 50 процент ытла йышăнаççĕ. Аргентина тăратакан таварсен шутне кунсăр пуçне тата шултра выльăх тирĕсем, сурăх тирĕсем, квебрах экстракчĕ, сысна, салĕ тата ытти таварсем кĕреççĕ. Вĕсем хушшинче—сыр, аш-какай консервĕ, сурăх ашĕ, сысна ашĕ.

Килĕшĕве пĕр çуллăха тунă; каласса татăлакан çĕршывсем шарламасăр килĕшнипе, вăл çултан-çул çĕнĕрен вăй илет.

АДН агентстви пĕлтерни

БЕРЛИН, августăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинри демократиллĕ хаçатсем паян АДН агентстви пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă:

Пĕлекен çынсем каласа панă тăрăх, Америка законсăр конфискациленĕ доллар счечĕсене тавăрса пама Демократиллĕ Германи Республикин правительстви ыйтнине хирĕç, Америкăн верховнăй комиссарĕ господин Конэнт: США правительстви çак долларсемшĕн апат-çимĕç таварĕсем сутма хатĕр, тесе пĕлтернĕ. Кун пек пулма пултарĕ. Анчах та верховнăй комиссар Конэнт çак счетсене тавăрса парассине паллă условисемпе сыхăнтарать. Счетсене законсăр арестленĕ. Çавăнпа та Демократиллĕ Германи Республикин правительстви вĕсене нимĕн хирĕççе тăмасăр тавăрса пама требовани лартать. США правительстви те, верховнăй комиссар та Демократиллĕ Германи Республикине апат-çимĕç таварĕсем сутас ĕçе хутшăнма пултараймаççĕ. Демократиллĕ Германи Республики колони мар, вăл хĕвеланăçĕнчи зонăри çĕршыв та мар. Унта вара чăнахах та экономикăлла политикăна ют çĕршыв империалисчĕсем хушнă пек пурнăçласа пыраççĕ. Америкăн верховнăй комиссарĕ чăнахах та Демократиллĕ Германи Республикинчи халăх пурнăçĕшĕн тăрăшать пулсан, унăн Демократиллĕ Германи Республикинчи мирлĕ строительствăна хирĕç Хĕвеланăç Берлинран е Хĕвеланăç Германирен кирек мĕнле провокаци те туса пыма пăрахас пулать.

Хĕвеланăçĕнчи хаçатсем Бонн правительстви Демократиллĕ Германи Республикин правительствине Хĕвеланăç Германире апат-çимĕç таварĕсем 25 миллион маркăлăх (Хĕвеланăç Германи укçипе шутласан) туянма сĕнни çинчен сăмах сараççĕ. Ку таранччен Демократиллĕ Германи Республикин правительстви ячĕпе çакнашкал сĕнÿ килни пулман.

Пурте пĕлеççĕ, Демократиллĕ Германи Республикин правительствипе Халăх палати Германин икĕ зони хушшинче суту-илĕве вăйлатасси çинчен тĕплĕ сĕнÿ туса хатĕрлесе хаçатсенче пичетлесе кăларчĕç. Çак сĕнÿсене панă май Демократиллĕ Германи Республикин правительстви Демократиллĕ Германи Республикипе Хĕвеланăç Германи хушшинче тавар çаврăнăшне пĕр миллиард марка чухлĕ йĕркелесси çинчен килĕшÿ тума хатĕр тăни çинчен пĕлтерчĕ. Хĕвеланăçĕнчи правительствăсем. малтанлăха кирлĕ услови тесе, тÿлевсем хĕвеланăçри марка тăрăх пулмалла текен требовани кăларса тăратаççĕ пулсан, ăна ытлашши иртĕхни тесе кăна шутлама пулать. Çакнашкал ыйтусене пĕртан правалла çĕршывсем суту-илÿ çинчен калаçусем иртернĕ чухне кăна сÿтсе явма пултараççĕ.

Хĕвеланăçĕнчи хаçатсем сÿлте асăннă ĕçсем çинчен çырнине Демократиллĕ Германи Республикине хирĕç империалистла провокацисем туса пыни тесе кăна хак пама пулать. Демократиллĕ Германи Республикинчи халăха «пулăшу» çинчен калаçни мар, Германин шалти ирĕклĕ суту-илĕвне вăйлатни, Германин икĕ зони хушшинчи суту-илÿ тĕлĕшпе Америка влаçĕсем туса хунă мĕнпур чăрмавсене пĕтерни кирлĕ.

Франциri çыхăну работникĕсен забастовки

ПАРИЖ, августăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Парламент Ланьель правительствине панă «уйрăм полномочисем» тăрăх правительство хатĕрленĕ малтанхи закон проекчĕсем ĕнер паллă пулса тăнă. Çак закон проекчĕсем учительсен, почтальонсен тата ытти служащисен пенси илмелли йĕркене улăштарма, «пулăшулла ĕçре» текен рабочисене 25 пин çын таран ĕçрен кăларма, штатсене чакарма палăртнă.

Государство учрежденийĕсемпе коммунальнăй учрежденисенче ĕçлекен служащисене хирĕç пыракан çак закон проекчĕсем Францири ĕçсыннисен анлă массисене тарăхтараççĕ. Ĕнер почтăсемпе телеграфсенче тата телефон станцийĕсенче ĕçлекен служащисен пĕтĕмĕшле забастовки пуçланнă.

Почта работникĕсен забастовки провинцисенче те ăнăçлă иртет. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, забастовка уйрăмах Бордо, Марсель, По, Нант, Клермон-Ферран, Сент-Этьенн, Нанси, Лимож, Страсбург хулисенче вăйлăн саралнă.

Забастовкăн уйрăмлăхĕ çакăнта пулать: почтăсенче ĕçлекен служащисем — Пĕтĕм Францири ĕçлев конфедерацийĕн, «христианла ĕçсыннисен конфедерацийĕн» тата автономиллĕ профсоюзсен членĕсем забастовка пуçласа янă хыççăн, вĕсем çумне «Форс увриер» профсоюзра тăракан çыхăну работникĕсем те хутшăннă. «Форс увриер» руководстви малтан забастовкăна хутшăнма килĕшмен пулнă.

Францири нумай хуласенче почта работникĕсен забастовки пĕтĕмĕшле забастовка пулса тăнă. Вăл паллă мар срока пырать. Телефонпа телеграф правительство заказĕсене кăна пурнăçлать.

Метропа автобуссем, чугун çулсем çинче ĕçлекенсен, коммунальнăй учрежденисенче ĕçлекен служащисен, газпа электропромышленноçра ĕçлекен работниксен федерацийĕсем те хăйсен работникĕсене правительство йышăннă закон проекчĕсене хирĕç кĕрешме чĕнеççĕ.

Паян Францин кăнтăрти тăватă департаментĕнче эрех тăвакансем забастовкăна хутшăннă. Вĕсем çулсене пÿлсе лартнă.

Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çулсене пÿлсе лартнă вырăнсене хураласа тăрас ĕçе муниципальнăй советниксем, хăшпĕр чухне тата мэрсем хăйсем те хутшăнаççĕ.

НОРВЕГИРЕ СОВЕТ ВОИНĔСЕН ЯЧĔПЕ ПАМЯТНИК УÇНА

ОСЛО, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). «Фрихетен» хаçат çапла çырать: Норвегири телеграф бюровĕ Кăнтăр Норвегири Набболлен тата Рамдалсволлен масарĕсем çинче совет воинĕсен ячĕпе памятник туса лартни çинчен пĕлтернĕ. Ситес çывăх вăхăтра çакăн пек памятник Бренхэй масарĕ çинче лартаççĕ.

ЕГИПЕТРА СУЭЦ КАНАЛĔН ЗОНИНЧЕ АНГЛИ ÇАРĔСЕМ ТĂНИНЕ ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕÇÇĔ

КАИР, августăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Исмаили хулинчи суту-илÿ тăвакан çынсем Англи çарĕсем Суэц каналĕн зонинче, уйрăммăн илсен Исмаилире, тăнине хирĕç протестлесе бойкот тунă.

Хаçатсем çырнă тăрăх, хулара иккĕмĕш кун ĕнтĕ пур магазинсем те хупă тăраççĕ. Сутуçăсем Англи çар çыннисене нимĕн сутма та килĕшмеççĕ. Магазинсем çине: «Эпир акăлчансене нимĕн те сутмастпăр», тесе çырса хунă.

ПАЯН «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАÇАТРА

Умстатья.—Ĕç тухăçлăхне ялан ÿстерсе пымалла.

Национальноçсен Совечĕн тата Союз Совечĕн 1953 çулхи августăн 6-мĕшĕнче пулнă ларăвĕсем çинчен Информациллĕ пĕлтерÿсем.

Национальноçсен Советĕнче.

Союз Советĕнче.

Национальноçсен Совечĕн Бюджет комиссийĕн Председателĕ И. С. Хохлов депутат ССР Союзĕн 1953 çулхи бюджечĕ çинчен тата ССР Союзĕн 1951 çулхипе 1952 çулхи бюджечĕсене пурнăçлани çинчен тунă содоклад.

Союз Совечĕн Бюджет комиссийĕн Председателĕ Л. Р. Корниец депутат ССР Союзĕн 1953 çулхи бюджечĕ çинчен тата ССР Союзĕн 1951 çулхипе 1952 çулхи бюджечĕсене пурнăçлани çинчен тунă содоклад.

Ют çĕршывсенчен килнĕ хыпарсем.

Тÿрлетни

ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕнче СССР Финанс министрĕ А. Г. Зверев тунă докладăн «Союзлă республикăсен бюджечĕсем» пайри 3-мĕш абзацри 15-мĕш йĕркене çапла тÿрлетсе вуламалла: «Армян ССР-ĕн 1.209 миллион тенкĕ», малалла текстри пекех.

Редактор заместителĕ
М. Н. ЯКИМОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-04, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 09304

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.

Тираж 20.000 экз.